К 84.09(=Чув)
М33
Ч-45720



Галина
Матвеева

# Чăваш

Национальная библиотека ЧР
4-045720

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Галина Матвеева

# Чăваш

Поэмăсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2013

OBESS
BECTP
ӨКЗЕМ

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-5
М 33

*Кӗнеке ал ҫырӑвӗ ачасемпе ҫамрӑксем валли чӑвашла ҫырнӑ произведенисен 2012 ҫулхи конкурсӗнче ҫӗнтернӗ. Конкурса Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ 2011 ҫулхи июнӗн 16-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленипе килӗшӳллӗн йӗркеленӗ*

Проверено 2 СЕН 2017

**Матвеева Г.А.**
М 33 Чӑваш: поэмӑсем / Г.А. Матвеева. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2013. — 79 с.
ISBN 978-5-7670-2036-2

Кӗнекери поэмӑсем Тӑван ҫӗршывӑн аслӑ вӑрҫинче хыпарсӑр ҫухалнӑ чӑвашсен паттӑрлӑхне ҫутатса параҫҫӗ. Вӗсенчен пӗри Польша территорийӗнче партизан отрячӗ йӗркелесе тӑшманпа ҫапӑҫнӑ. Хӑюллӑ командир Чӑваш ятпа ҫӳренӗ. Вӑл кам пулнине вӑрҫӑ чарӑнсан тепӗр ҫирӗм ҫултан тин тупса палӑртнӑ. Чикӗ хӗрринчен кӑкӑр ачипе киле ҫитнӗ мӑшӑрӗн пурнӑҫӗ те — чӑн-чӑн паттӑрлӑх.

Иккӗмӗш произведени геройӗ ҫинчен 67 ҫул нимле сасхура та пулман. Халӗ вӑл тӑван ял масарӗнче выртать. Паттӑрсем хыпарсӑр ҫухалмаҫҫӗ.

**УДК 821.512.111**
**ББК 84(2Рос=Чув)6-5**

Ч-45720

**ISBN 978-5-7670-2036-2**

© Матвеева Г.А., 2013
© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2013

Национальная библиотека Чувашской Республики

## ЁНЕНТЕРӰЛЛӖ ПУЛСА ТУХНӐ

Галина Матвеевӑна эпӗ вӑл ҫаcатра ёҫленӗ ҫулсенченех пӗлетӗп. Вӑл ҫырнисене яланах вӗсне ҫитичченех хавхаланса вуласа тухаттӑм, чи малтан сӑнласа кӑтартнӑ ҫынсен шалти туйӑмнекӑмӑлне кӑтартма пултарни савӑнтаратчӗ мана. Ҫав ӑсталӑх вӑл ҫыравҫӑ пултарулӑхӗн тӗп пахалӑхӗсенчен пӗри-ҫке.

Ҫак кӗнекене кӗнӗ икӗ хайлава (вӗсене автор поэма тесе палӑртнӑ) эпӗ вун-вун ҫул тишкерсе ӑсталӑх пухнӑ критик пек мар, университет профессорӗн лекцийӗ евӗр те мар, пачах урӑх куҫпа пӑхса хакласшӑн. Вӑл куҫ — вӑрҫӑ асапне тӳссе ирттернӗ арсемпе арӑмсен чӗрҫи ҫинче сиксе ҫитӗннӗ ӳсӗмӗн курӑмӗ. Пирӗн аттесем вӑрҫӑ вучӗ витӗр тухнӑ, аннемӗрсем те тылри йывӑр пурнӑҫа тивӗҫлипе тӳссе ирттернӗ. Эпир — вӑрҫӑ иртсен те унӑн сывлӑшӗпе сывласа ҫитӗннӗ ӑру. Ман шутпа, ҫав сывлӑшпа Галина Матвеева та сывласа курнӑ. Унсӑрӑн сӑвӑҫ «Киле килчӗ салтак вӑрҫӑран...» хайлавне ӑнаҫлӑ ҫырайман пулӗччӗ.

Тепӗр куҫ-проекци те пур манӑн, ӑна эпӗ хамӑн ҫырас пултарулӑх еплерех улшӑнса пынине аса илнипе ҫыхӑнтаратӑп. Пӗр кулӑшларах саманта аса илем-ха. Эпӗ хам пӗр вун-вун икӗ ҫулсенче чухне партизансем ҫинчен калав пекки хайланӑччӗ. Тӗрӗссипе, Л. Агаковӑн тата ҫав вӑхӑтри ытти прозаиксен витӗмӗ питӗ вӑйлӑччӗ унта. Инкене, куккан арӑмне, вуласа патӑм ҫавна. Вӑл мана ҫапла вӗрент-

се каларӗ: «Витя, эсӗ ху курман япаласемпе ӗҫсем пирки мар, ху тӳссеирттернисем пирки ҫыр-ха».

Каярах, журналист пулса тӑрсан, ял ӗҫченӗсем ҫинчен сахал мар очерк шӑрҫаларӑм. «Ӑҫтан пӗлсе ҫырнӑ эсӗ манӑн ӑшри туйӑмсене, чун пӑлханӑвне?» — тесе тӗлӗнетчӗҫ очеркра сӑнланнӑ ҫынсем. Ҫын психологине тарӑн пӗлни писателе ҫеҫ мар, журналиста та ӑста очерк-тӗрленчӗк ҫырма сахал мар пулӑшать-мӗн. Сӑмахӑм каллех Г. Матвеева ҫырнисемшӗн вырӑнлӑ пек. Шӑпах ҫав ӑсталӑх (ҫыннӑн ӑшри туйӑмне уҫса пама пултарни) пурри ҫураҫӑнтарать авторӑн публицистикӑлӑхӗпе, калу стилӗпе.

Илер-ха «Киле килчӗ салтак вӑрҫӑран...» хайлава. Унӑн ячӗ тата эпиграфӗ вулавҫа паллӑрах фабула-сюжета аса илме хистет. Эпӗ, сӑмахран, малтан вӑрҫӑра хыпарсӑр ҫухалнӑ салтак, тыткӑнра пулнӑскер, кайран тӑван килне таврӑнни ҫинчен ҫырнӑ пулӗ тесе шухӑшларӑм (ҫавӑн пек синкерлӗ шӑпаллӑ ҫынсем те пулнӑ-ҫке!). «67 ҫул иртсен таврӑннӑ тени тӗрӗсех-ши?» — мӗлтлетсе илчӗ иккӗленӳллӗрех шухӑшӑм. Ҫав хушӑрах шаблонлӑ схема та аса килчӗ: упӑшки тыткӑнран яланлӑхах е курма таврӑннӑ, арӑмӗпе ачисем ӑна йышӑнмаҫҫӗ... Мар иккен, Калуга ҫӗрӗнче Иван ятлӑ чӑваш салтакӗн вилӗ шӑммисемпе ун ҫумӗнче пулнӑ япалисене тупнӑ. Хайхи хаҫатра ҫырнисем аса килеҫҫӗ: шкул ачисем, студентсем ҫапӑҫу вырӑнӗсенче пуҫ хунӑ салтаксен вилтӑприсене, вӗсен ячӗсене ҫырса хунӑ капсулӑсене тупаҫҫӗ, тӑванӗсене ҫухалнӑ ҫынна шырама пулӑшаҫҫӗ. «Оригиналлӑ-ши ҫак факт илемлӗ литературӑшӑн?» — иккӗленет ӑшри тӗпчевҫӗ. Публицистика илемлӗ шухӑшлава пӑвса лартнӑнах туйӑнать.

«Чим-ха, — илтӗнет тепӗр сасӑ (вӑл салтакпа тылри арӑм чӗрҫи ҫинче сиксе ҫитӗннӗ вулавҫӑн сасси). — Кунта хыпарсӑр ҫухалнӑ салтака сӑлтавсӑрах сутӑнчӑк вырӑнне хуни ачан, унӑн амӑшӗн трагедийӗ пулса тӑни ҫинчен каланӑ-ҫке!»

Хайлава вуланӑ май шухӑш улшӑнса, тарӑнланса пырать, ҫиелти публицистикӑлӑх («Вӑл тӑшмана Мускав патне яман» еверлӗ пӗтӗмӗшле, ҫав хушӑрах чунсӑр сӑмахсем) ерипен тарӑн синкерлӗхе ҫаврӑнать:

Ҫын ҫухални тата хӑрушӑрах —
Тухатӑн шанӑҫран ҫав самантрах.
Тен, паттӑрла вилсе салтак ҫӗтет?
Ҫемйин хисепӗ пурпӗрех пӗтет.

Сутӑнчӑк ачи ята илтме питех те ҫӑмӑл пулнӑши? Кунта автор ача психологине, унӑн асапланӑвне питӗ ӗнентерӳллӗн сӑнланӑ. Сӑмах май, Г. Матвеева чӑваш йӑли-йӗркипе традицилле ӗненӗвӗсене лайӑх пӗлет, вӗсене хӑйӗн произведенийӗсенче ӑнӑҫлӑ вырнаҫтарать.

Ӑшри тӗпчевҫӗ каллех кутӑнлашать, хайлава ӑнӑҫлӑ вӗҫлемен, тӗп шухӑшне пуссах палӑртман тесе кӳлешет...

Ку вӑл хайлава хурламалли сӑлтав мар тет салтак ачи пулни. Кирлех-ши ҫак тавлашу? Поэмӑра чӑн пулни ҫинчен каласа панӑ-ҫке!

«Чӑваш» поэмӑна та пурнӑҫра чӑн пулнӑ ӗҫ-пуҫ ҫинчен хайланӑ. Ҫӑмӑл мар ҫав историре чӑн пулнине илемлӗ тӗнчене кӗртсе тепӗр хут чӗртсе тӑратма. Хам опытран пӗлетӗп (эпӗ Ширвановсен килйышӗ ҫинчен поэма пекки ҫырма хӑтланнӑччӗ, пулса пӗтмерӗ). Л. Толстой та Петӗр патша ҫинчен роман ҫырма шухӑшланӑ та кайран шухӑшӗнчен писнӗ, истори чӑнлӑхне кӑтартаймасран шикленнӗ.

«Чăваш» поэма чи малтан психологи тата истори чăнлăхĕ тĕлĕшĕнчен питех те ĕнентерӳллĕ пулса тухнă. Кунта илемлĕх тĕнчи хуçаланать, вăл публицистикăлăха ирĕке ярассинчен асăрхасах тăрать. Фабулăна икĕ йĕрпе аталантарса пыни сюжета хиврелетет, сăнарсен чун-чĕрине туллинрех уçса пама пулăшать пек. Тĕлĕксемпе усă курни сăвăçа хайлаври ĕç-пуç еплерех çаврăнса тухассине систерме пулăшать, геройсен ăш-чикне тарăннăн курса ăнланма май парать. Хăш-пĕр сăмах çаврăнăшĕсем вулавçа тăван поэзи контекстне курма пулăшаççĕ («Ăçта каятăр каçа хирĕç?», «Утас çулсем вара инçе» йышшисем). Ку вăл тĕрлĕ текстсен хутшăнăвĕ-диалогĕ.

Вăрçă хыççăнхи ӳсĕм пек аса илсе çыратăп. Пĕррехинче манран (эпĕ ун чухне студентчĕ) хамăн асаннен шăллĕн арăмĕ çапла ыйтрĕ: «Радиопа темле Яков Николаев чăваш çинчен калаçрĕç. Вăрçăра хыпарсăр çухалнă пирĕн ывăлăмăра та çапла чĕнетчĕç. Пулăш-ха ăна шыраса тупма».

Якку ятлă миçе чăвашăн амăшĕпе арăмĕ ĕмĕтленмен-ши вăрçăрисем тупăнасса, тăван киле таврăнасса! Вĕсем юратнă ывăлĕсемпе мăшăрĕсем сутăнчăк маррине чунтан-чĕререн ĕненнĕ, çывăх çыннисем тупăнасса шаннă. Поэма вĕçĕ ун пек çынсене хăват парать: «Мухтав сана, ăçта пулсан та чăваш ятне яман Чăваш».

Г. Матвеева — ăсталăхне пухса пыракан пултаруллă сăвăç. Унăн стильне ыттисеннипе пăтраштараймăн. Çыравçăн тăван çĕре юратма вĕрентекен хайлавĕсем чăвашлăх тутипе тутлăланнă, унăн сиплĕхне кашни вулавçа тутанса пăхма йыхравлаççĕ.

*Виталий ЭРТИВАН*



# Чăваш

*Тăван çĕршывăн аслă вăрçи вăхăтĕнче*
*Польшăра партизансен отрядне*
*ертсе пынă Чăваша — Яков Николаевич*
*Николаева тата унăн мăшăрне*
*Анастасия Константиновнăна*
*асра тытса*

Çĕртме. Çĕрле пулсан та ăшă.
Ĕшеннĕ Радово канать.
Чăваш çемйи — пĕр çамрăк мăшăр
Выртман-ха. Çутă курăнать.

Заставăран тин килнĕ Яша.
Наçтук вырнаçнă сак çине,
Сăнать телейлĕн те йăвашшăн
Пепкийĕ кăкăр ĕмнине.

— Эс, Яша, ывăннă пуль, çывăр,
Эп çăнăх алласа хурам.
Ача çуратнă Шура — ывăл.
Ирпе ирех чуста çăрам.

— Куна палăртмасассăн — çылăх!
Ыран пире хуплу кирлех.
Политрукпа тăван пек çывăх,
Кайса саламлăпăр пĕрле.

Çап-çамрăк мăшăршăн çу касĕ
Çерçи сăмси пекех кĕске.
Аван паян, епле кун касăн
Ыран — ăна пĕлместĕн-çке.

Янрарĕ кĕç тревога: тăрăр!
Çапла вăл пурнăç чикĕре.
Тумланчĕ Яша, тăпăр-тăпăр
Сас турĕ, çĕтрĕ çенĕкре.

Шутларĕ мăшăрĕ: «Тăрас-ши?
Чуста çăрмашкăн иртерех.
Кĕç таврăнать ак Миля ашшĕ,
Пĕр-ик сехет, тен, ирттĕрех».

Сисмен те Настя пулнă кăтăш,
Пырать пек хуп-хура уйра.
Тин сухаланăскер, çĕр кăпăш,
Пута-пута анать ура.

Чим! Йытă мар-и çавă? Кашкăр!
Апла тăк мĕн туса тăрас!
«Кай ман патран! Ан тив, ан ашкăн! —
Хăрать Настук. — Ăçта тарас?»

Пушаннă уй йăлтах яр уçă.
Хыçрах пек кашкăр шăл шаккать.
Калла пăха-пăха пыруçăн
Хĕрарăм ӳкрĕ шăтăка.

Нӳхреп-ши ку е пусă? Тарăн.
Йĕри-тавра хура тăпра.
Тапаçланать тухма мăнтарăн,
Анчах вăй пĕтнĕ шăлтăрах.

Тăрук шартах сиксе вăранчĕ:
Тавах Турра, вăл уйра мар.
Çапах та ун чĕри тапранчĕ:
«Ку, тем тесен те, ырра мар».

Сăхсăхрĕ, минтере çĕклерĕ,
Ăна вăл хучĕ çавăрса —
Ан таврăнтăр ку тĕлĕк терĕ,
Лăпланчĕ, кайрĕ çывăрса.

Ма канлĕ мар-ши ыйхă кĕçĕр?
Ялта пек халь, пушах урам.
Ача йăтса килне вăл кĕчĕ,
Çара пуçах хăй, çаруран.

Пĕр тетĕш çеç сăмах чĕнмесĕр
Ларать пек пушă тĕпелте.
Наçтук ыйтать: — Мĕскершĕн эсĕ
Пĕр-пĕчченех, Санькка тете?

Кĕр-р-р! кĕрлесе вăратрĕ сасă,
Ванас пек чӳрече чĕтрет.
Чĕре сикет инкек пулассăн,
Ахтур, мĕне ку пĕлтерет?

Яр-р! уçăлса каять те алăк:
— Пуçтарăн! Мильăна чĕрке!
Çук вăхăт калаçса тăмалăх, —
Тет мăшăрĕ. — Паян ирпе

Пуçланнă вăрçă. Нимĕç çарĕ
Чикке аркатнă...Васкарах!
Кĕтет машина, леçсе ярĕ
Сире кунтан аяккарах.

Ман юлмалла. Киле эс таврăн,
Чăваш ене, Шупашкара.
Мĕнле çиткелĕн-ши, мăнтарăн?
Тархасшăн, Мильăна упра.

Темех ан йăт — халтан çеç кайăн,
Сан çĕклемӳ ав — пĕчĕкки.
Ăсатаймас, ан ту эс айăп,
Хăрушлăхра çĕршыв чикки.

Мĕн мулĕ пултăр офицерăн?
Пуян та мар пӳрт ăш-чикки.
Чун савнипе пĕрлешнĕскерĕн
Ачи пур — ылтăн пĕрчĕкки.

Çемье альбомĕ хаклă мар-и,
Çук, Настя хăвармасть ăна.
Якку парни — сехет. Çыхмарĕ,
Ăна та хучĕ сумкăна.

Вăл кускаларĕ пӳлĕм тăрăх —
Пĕр çакă çеç илес пекки.
Пĕччен мĕнех йăтайăн урăх?
Ун мулĕ — алăри пепки.

...Кайма иккен кая та юлнă:
Ял ик енчен те çулăмра.
Вутра ухмах кăна хăюллă.
Снаряд вĕçет хыçра, умра...

Ниçта кайма пĕлмесĕр Настя
Кĕрсе пытанчĕ сарайне.
Куçа хăрушлăх курăнмасть те,
Пĕрех инкек сыхлать хăйне.

Йăшăлтатса пуçне кăларчĕ
Сап-сарă улăм ăшĕнчен
Арçын ача. Наçтук та ларчĕ
Купа ăшне пепкипелен.

— Лекес тĕк бомба — çăлăнаймăн,
Кунтан тухар пуль, — тет ача.
— Мĕн çырнинчен пĕрех тараймăн,
Ыр Турă упрасан анчах...



Ăçтан-ха хӳтлӗх патăр улăм?
Тухса çеç кайрӗç — самантрах
Хаплатрӗ тем, çӗкленчӗ çулăм...
Вилетчӗç вӗт çав сарайрах.

Ял варрипе ав урăм-сурăм
Ёрӗхтерсе пырать лаша.
Кам урапа çинче? Тен, Шура?
Çавах, ачийӗ юнашар.

Тăрук чӗвен тăрса кӗçенчӗ
Лаша, арканчӗ урапа.
Ял вӗçӗнче тусан çӗкленчӗ.
Танксем! Мӗн пулӗ Шурăпа?!

Епле-ха пăрахса таратăн —
Выртать юн юхтарса салтак.
— Кӳр суранна çыхса яратăп, —
Наçтук шур тутăрне салтать.

— Манпа эс уссăр чăрманатăн,
Патрон пуласчӗ халь! Патрон!
Куç хупиччен пӗр тăшмана та
Ирттермӗттӗмччӗ хам патран.

Пуçне хума та хатӗр паттăр,
Алли чӗтремӗ хӗç-пăшал
Тытсан, анчах кама аркаттăр,
Кама тӗп тутăр-ха пуш ал?

Кӗрлет пӗр вӗçӗм артиллери.
Шел, пирӗн мар вăл — нимӗçсен.
Миçе мӗльюн çынна вӗлерӗ
Ылханлă Гитлер — юнӗçен?

Хӗвел те тухрӗ, те пытанчӗ —
Тусанлӑ, тӗтӗмлӗ тӳпе.
Пӗр ҫын шӑпи ҫеҫ мар таптанчӗ,
Тӗнче йӑлт ҫаврӑнчӗ ӳпне.

Наҫтук тухӑҫалла пӗр вӗҫӗм
Утать, ӑшне хӗлхем яман.
Пулать-ши ҫак асапӑн вӗҫӗ?
Хыҫра — тӑшман, малта — тӑшман.

Вут хыпнӑ ялсене кӗмерӗ,
Уйра сасартӑк Яшӑпа
Тӗл пулчӗҫ. Нихӑш те пӗлмерӗ:
Яланлӑх уйӑрать шӑпа.

Ҫар офицерӗ ҫупӑрларӗ
Юратнӑ мӑшӑрне, хӗрне.
Килех ҫитме хушса каларӗ,
Хӑй чупрӗ ҫапӑҫу хирне.

Наҫтук ҫимен пӗр татӑк ҫӑкӑр,
Ҫапах хӗрне вӑл ӗмӗртет.
Хуплать ун ҫӑварне: «Ан кӑшкӑр.
Тӑшман илтес тӗк — пӗтерет».

Пӗр-пӗр яла кӗрес — хӑрушӑ,
Ӑна, тен, йышӑннӑ тӑшман?..
Ларса канать те вӑл пӗр хушӑ
Каллех утать. Умра — вӑрман.

Тусанлă çул çинче сасартăк
Вăл асăрхарĕ сухари.
Çимелĕх çук — пĕр пĕчĕк татăк,
Тутанчĕ: тутлă çав тери.

Чĕре сури туни пулмарĕ,
Ма илчĕ-ши ăна Наçтук?
Халь ун утма та вăй юлмарĕ,
Çиес килет — чăтма та çук.

— Умри яла кĕрсен мĕнле-ши? —
Ыйтать тĕл пулнă инкерен.
Йĕрет пĕр чарăнмасăр лешĕ:
— Ан кĕрĕр, тарăр инкекрен.

Халь çĕнĕ власть тесе пĕлтерчĕç
Фрицсем, ухтарчĕç килĕрен.
Çич çамрăка çакса вĕлерчĕç.
Ма çĕр çăтмасть-ши Гитлере?!

— Тупасчĕ ман пĕр татăк çăкăр...
Çĕр улмипе те вăй кĕрет.
Виç кун çимен. Пуш-пушă кăкăр.
Хам чăтăттăм — ача йĕрет.

— Кил-çуртăма кĕме хăратăп,
Унта фашист хуçаланать.
Тăхта, чие татса паратăп,
Ман çимелли те çав кăна.

Тăшман куç умĕнчен эс пăрăн,
Кĕрсе пытан çав вĕтлĕхе.
Апат тесе тем курса тăрăн,
Ан çухатсамччĕ тимлĕхе.

Кӗҫ таврӑнчӗ хайхи хӗрарӑм,
Саппун арки ҫинче — ҫырла.
— Каҫар, нимех те параймарӑм,
Паянлӑха атя ҫырлах.

Ыйткалакан шӑпийӗ тертлӗ.
Наҫтук ура ҫинчех ҫиет.
Ҫырлийӗ шултӑра, сӗтеклӗ,
Нихҫан курман кун пек чие.

Туять Наҫтук чӑмланӑ майӑн:
Ун кӑкӑрӗ сӗтпе тулать.
Апла тӑк малаллах вӑл кайӗ,
Пепкийӗ канӑҫлах пулать.

Тухӑҫалла утать такам та,
Пулмарӗ пӗлӗш ун валли.
Ҫумра ҫукран пӗр паллакан та
Пачах та лӑш курмасть алли.

Пӗр кун сасартӑк асӑрхарӗ:
Инҫех те мар, виҫ утӑмра,
Палланӑ ҫын пек. Юля мар-и?
Утма юлташ пулать ҫумра.

Тинкерчӗ леш те: — Настя, эс-и?
— Аван-и, Юля? Ӑҫталла?
— Кӗл пулчӗ ман тӑван кӗтесӗм,
Тарса эп ҫитрӗм кунталла.

Фашистсене ҫапса аркатнӑ,
Тен, кивӗ чикӗ хӗрринче?..
Эп — медсестра, фронта васкатӑп.
Ман вырӑн — вӑрҫӑ хирӗнче.

Национальная библиотека
Чувашской Республики
4-45720

— Тухӑҫалла выртать ман ҫул та:
Ҫитес пулать Шупашкара.
Тавах Турра, сана тӗл пултӑм,
Пӗрле чуна та лӑпкӑрах.

Юлташ пулсан ҫӗклем те ҫӑмӑл,
Асап та пайланать икке.
Кӑштах ҫуталнӑ пекчӗ кӑмӑл,
Инкек юнашарах иккен.

Ҫӳлтен тӑшманӑн самолечӗ
Ҫӑхан пек анчӗ тӑрӑнса.
Ҫулать ҫава пек пулемечӗ,
Епле юлас-ши пӑрӑнса?

Вӑй пуррисем чӑл-пар саланчӗҫ
Ӑҫта куҫ курнӑ — ҫавӑнта.
Хал ҫуккисем ҫӗре йӑванчӗҫ,
Ҫулне вӗҫлерӗҫ ҫакӑнтах.

Наҫтук ачипеле вӑр-варрӑн
Йӑванчӗ бомба путӑкне.
Те ӳкрӗ мелсӗррӗн мӑнтарӑн,
Тем шӑйӑрчӗ хул калакне.

Тусассӑн тепӗр икӗ ҫаврӑм
Ҫухалчӗ юнӗҫен тӑшман.
Асаплӑн шухӑшлать хӗрарӑм:
«Халь Юльӑна тупасчӗ ман».

— Ӑҫта эс, Юля?! Эс сывах-и?
Сас пачӗ леш: — Пурнатӑпах!
Ылханлӑ нимӗҫ вӑр-хурахӗ
Тӗп пулнине куратӑпах!

Чим, Настя, сан кĕпӳ юнланнӑ,
Амантрĕҫ-им? Ӑҫтан? Кала.
— Хул калакки сурать-ха манӑн,
Чул шӑйӑрттарчĕ пулмалла.

— Эс, тусӑм, кĕпепе ҫуралнӑ, —
Тет Юля хӑй те тĕлĕнсе. —
Чул мар ҫав, пуля суранланӑ
Хул калакне кӑшт сĕртĕнсе...

Ку ҫеҫ ҫитменччĕ — ячĕ ҫумӑр,
Ислетрĕ тӑкнӑн чĕресрен.
Тӑрса ирттерчĕҫ ҫума-ҫумӑн:
Тур ҫӑлтӑр Миля чирлесрен.

Хӑйсем лачкам, пит тӑрӑх Настьӑн
Те ҫумӑр, те куҫҫуль юхать?
Ниҫта та хӳтлĕх тупаймастӑн,
Хĕвел ҫеҫ хĕрхенсе пӑхать.

Ҫул ҫӑрӑлчӑк, ҫапах утаҫҫĕ,
Ҫитсе кĕреҫҫĕ пĕр яла.
Пушах вĕсен апат хутаҫĕ,
Каллех тӑсма тивет алла.

Выҫ хырӑма пушшех астарнӑн
Лаҫран килет кукар шӑрши.
Хуҫи килтех, яшка антарнӑ,
Унран тутли халь мĕн пур-ши?

— Аван-и? — сывлӑх сунчĕ Юля. —
Каҫар, ҫӳретпĕр нушапа.
Килтен тухни пĕр уйӑх пулĕ,
Ҫитермĕн-ши вĕри апат?

— Кĕçех полицайсем çитерĕç,
Вĕсен апачĕ вĕрирех!
Килеççĕ ак, нумай кĕттермĕç,
Çитсессĕн систереп тӳрех. —

Юнарĕ мăнтăркка хĕрарăм:
— Çӳреççĕ выçă анчăксем!
Сире валли-им янтăларăм?
Тасалăр, çапкаланчăксем!

Чулпа перес пулсассăн чул та
Чуна тивмест пуль çав таран.
Уттарчĕç. Куççуль витĕр çул та
Тĕтреллĕн курăнать аран.

Львов çав тери хитре хулаччĕ,
Ларать-мĕн халь те чиперех.
Тăшман çитерес çук кулачă,
Иртсе каяс кĕмесĕрех.

Кăшт леререх, тен, вилĕм тупнă
Фашист, çĕр çăттăрччĕ ăна.
Шел, паранна-мĕн Ровно, Дубно,
Чакать-мĕн Хĕрлĕ Çар чăнах.

Чакмашкăн çăмăл-им Яккушăн?
Чăтма çук чунĕ тăвăнать.
Çемйи аса килет те, уншăн
Чĕри юнпах-çке çăвăнать.

Чĕрех-ши мăшăрĕ те хĕрĕ,
Выçах-ши, тутă-ши вĕсем?

Тен, вилём кӳнӗ вӑрҫӑ хирӗ,
Юлман, тен, ячӗ-шывӗсем...

Тин ҫеҫ унка татса тухсаччӗ —
Тӑшман ав хупӑрлать каллех.
Ют ҫарӑн пысӑкрах хӑвачӗ —
Пӗтетӗн чакмасан халех.

▽▽▽

Ҫак самантра пӗлесчӗ Яшӑн:
Ун пӗчӗк хӗрӗ чиперех.
Вӑл амӑш аллинче, ҫыврасшӑн.
Наҫтукӑн утмалла пӗрех.

Фрицсем хуҫа-мӗн пур ялта та,
Кӗмесӗр ҫӗр каҫан хирте.
Ыран каллех выҫах утатӑн...
Ҫапла кун хыҫҫӑн кун иртет.

Ёшеннӗ, ывӑннӑ виҫесӗр,
Хӑҫантанпа тӳшек курман.
Мӗн пур пек хӳтлӗхӗ вӗсемшӗн —
Тыр-пул ани те сӗм вӑрман.

— Капла эпир выҫсах вилетпӗр, —
Тет Настя Юльӑна.
— Итле,
Тен, ҫак ялта кӑшт йӑл илетпӗр,
Атя уй хӗрринчи киле.

Хӑра-хӑра пӳрте кӗреҫҫӗ,
Утма тек чӗптӗм вӑй та ҫук.

Хуҫи мĕн каласса кĕтеҫҫĕ:
Хăварĕ ҫĕр каҫма е ҫук?

Тен, фрицсене кайса систерĕ?..
Вара яланлăх пĕтрĕ пуҫ.
Хуҫи поляк-мĕн:
— Иртĕр, — терĕ.
Сас пачĕ Настя:
— Тавтапуҫ!

Кусен те пур-мĕн чĕвĕл кайăк —
Пĕр виҫĕ ҫулсенчи ача.
Ун амăшĕ илемлĕ, лайăх,
Чунпа та сивĕ мар пачах.

Вăл типĕ пусмапа чĕркерĕ
Наҫтукăн пĕчĕк пепкине.
— Ыран ирччен типет ку, — терĕ,
Ҫуса та ҫакрĕ кипкине.

Йĕрсе ăша ҫунтарнă Миля
Лăпланчĕ, тутлăн анаслать,
Пан аллинче выртать вăл меллĕ,
Кунтах ачи те кускалать.

Пан мăшăрĕ сĕтпе сăйларĕ
Выҫса хавшанă ҫынсене.
Ик ҫын валли тӳшек майларĕ,
Сарса вырттарчĕ урайне.

Сăпка пек туйăнчĕ ҫак вырăн,
Килти пек ҫывăрчĕ Наҫтук.
Тĕлленнĕ тĕлĕкĕ те ырă,
Унта нимле фашист та ҫук.

Уйра хайхи çулать пек утă,
Ачи ун ӳснĕ — виç çулта.
Миша юпи çинче (кам çутнă?)
Мĕл-мĕл туса çунать çурта.

Утса килет пек васкамасăр
Çулпа ун мăшăрĕ Якку.
...Çак самантра шăв-шав тумасăр
Шаккарĕç алăка: тук-тук!

Кӳрши-мĕн систерет: — Пытанăр!
Ял вĕçĕнче тăрать шăв-шав.
Полицайсем ирех вăраннă,
Пуçланă ухтару-шырав.

Хĕрарăмсем тумланчĕç шăпăрт,
Апат чиксе хутаççине
Кĕçех кĕрсе çухалчĕç хăвăрт
Çурла курман тыр пуссине.

...Тĕнчен пур пиччĕнĕ, тӳнтерĕ,
Çителĕклех хури-шурри.
Шăпа килес пулсан та тертлĕ
Пĕл: пурпĕр çĕнтерет ырри.

Житомир ишĕлнĕ тем тĕрлĕ,
Арканчăк урамсем пушах.
Тӳпе йĕри-тавра хĕп-хĕрлĕ,
Ку шурăмпуçĕ мар — пушар.

Урампала пыраççĕ иккĕн,
Пĕрин аллийĕнче ача.

Йěри-тавра сăнаççě шиклěн:
Юлман-им çын кунта пачах?

Сасартăк иккěш те илтеççě:
У-а! у-а! ача сасси.
Пěр харăс сăхсăхса илеççě:
Тата мěн пур-ши курасси?

Картишěнчен тухать хěрарăм,
Алри чěркемěнче — пепке.
— Иртсе ан кай, ачаллă арăм,
Курсам: выççах вилеççě-çке.

Тăшман ача çуртне тěп тунă,
Йăлтах хăварнă çěмěрсе.
Хěрарăм тархаслать кěлтунăн:
— Пěр виççěшне хăть ěмěртсем.

Халь пур çěрте те вăрçă хирě,
Тата хăрушăрах çěрле.
Ăçта каятăр каçа хирěç?
Юлсамăр пирěнпе пěрле.

Йăлăнтарса тăмарě Настя —
Ача сасси чуна çурать.
Вăл амăшě-çке, ăнланмасть-им,
Мěн кирлине хăех курать.

— Йěреççě пурте. Пурте выçă,
Хăшне-ши кăкăр хыптарам?
Сěт антарма чей ěçнě хыççăн
Мěн пуррине суса парам.

— Мěнле чěнес сана, тăванăм,
Çулу выртать хăш еннелле?



— Анне Наçтук тесе ят панӑ,
Шупашкара ман çитмелле.

Чӑвашӑн тӗп хули вӑл. Атӑл
Ун çумӗпе юхса иртет.
Ёçчен ман халӑх, тараватлӑ,
Тыр-пул акать вӑл, пир тӗртет.

Шап-шуррӑн çӗмӗрт çурӑлсассӑн
Яш-кӗрӗм уява тухать.
Уявӗ акатуй пек аслӑ,
Юрри таçта çити юхать.

Хӑмла татса сӑра тусассӑн
Пухать чӑваш хӑна-вӗрле.
Эрех ӗçмесӗрех хаваслӑ
Ратне пуçтарӑнсан пӗрле.

Эх!.. Вӑрçӑ пӗтнине курасчӗ,
Сана чӗнсе Шупашкара
Умна шӑрттан касса хурасчӗ,
Сӗнесчӗ кӑпӑклӑ сӑра.

— Эс шан, Наçтук: çитет çав вӑхӑт —
Фашизм пурпӗр тӗп пулать.
Паян ытла хаяр вӑл, сӑхӑ,
Шӑпи ун, курӑн ак, тулать.

...Нумай ыйтать-им пӗчӗк хырӑм —
Çывраççӗ тутӑ пепкесем.
Пур сан та, Миля, ӑшӑ вырӑн,
Кур эс те тутлӑ тӗлӗксем.

Ирпе ӑсатрӗ леш хӗрарӑм:
— Тыт, Настя, утиял. Илсем.

Хĕр ачуна витсе вырттарăн
Уйра çĕр ирттерме тивсен.

Ют ачасем тесе тăмарăн,
Ытла та ырă-çке чĕрӳ.
Сăвап сана, ачаллă арăм,
Телейлĕ пултăрччĕ хĕрӳ.

Горизонтра çĕкленнĕ çулăм,
Фронт линийĕ таçта умра.
Асаплă, тертлĕ вăрçă çулĕ,
Юрать-ха Юля пур çумра.

Шăкăлтатса утса пыруçăн
Пырса тухаççĕ улăха.
Ку вырăн пур енчен те уçă,
Хĕвел савать тавралăха.

— Кăштах канса илер пуль, Юля?
— Юрать, самантлăха ларар.
Шыв урлă курăнать ав çулĕ,
Кĕперĕ пур-ши — паллă мар.

— Çанталăк ытарма çук ырă,
Кĕтӳ çӳрет сапаланса.
Чăвашри пек илемлĕ вырăн, —
Пуплет Наçтук хавхаланса. —

Çава тытса çулаттăм утă
Эп çакăн пек мăн улăхра.
Темех çимен те... пулнă тутă
Килте сĕт-турăх тулăхран.

Ыраш çăкри — чăваш апачĕ,
Хирте вылянă чух ăрша
Çуратнă çĕр-анне хăвачĕ
Сывланипех кĕрет ăша.

Чăвашăн ялĕсем çырмаллă,
Пĕвисенче — карас, çупах...
Вăрманĕсем кăмпа-çырлаллă,
Унти пек ыр кĕтес çуках.

Киле çитесчĕ... Кур-ха, Юля,
Ытла та шăп ку тăрăхра.
— Ку лăпкăлăх ултавлă пулĕ,
Тăшман пурах пек çывăхра.

Чăнах та, кĕç ак урăм-сурăм
Пеме тапратрĕç ик енчен.
Урса чупать ĕне те сурăх —
Пуçланчĕ тамăк... Эй, тĕнче!

Кĕлеткипе хупларĕ Юля
Часрах Наçтукăн пепкине.
Вĕçет кăна пуç çийĕн пуля —
Кам кĕтнĕ-ха кун пеккине?

Умран переççĕ, хыçалтан та,
Никам та шеллемест патрон.
Тин тавçăрать Наçтук: «Ăнлантăм,
Апла кунтан иртет-ха фронт».

Аран-аран шуса тухаççĕ
Вĕсем вут-çулăмран, анчах
Ниçта та тупаймаççĕ каçă.
Аркатнă кĕпере тăнчах.

Хăвалăхра тĕл пулчĕç паçăр
Кĕтӳсĕр юлнă кĕтӳçпе.
Ыйтаççĕ:
— Тупма çук-ши каçă?
Тен, канаш парăн ку ĕçпе?..

— Совет салтакĕсем кĕтеççĕ
Шыв леш енче каç пуласса.
Вĕсен пур сулă, — тет кĕтӳçĕ. —
Ыйтас пулать пĕрин каçса.

— Шывра эп чул пекех путатăп, —
Тет Юля. — Тен, Наçтук, хăвах
Ишсе каçатăн?.. Эп юлатăп,
Мана эс ачупа хăвар.

Шыва çеç мар, кĕрет вута та
Ачишĕн Настя шиксĕрех.
— Юрать, — тет, —
пурпĕр мел тупатăп
Илсе каçмашкăн иксĕре.

Вăл пулă пек ишетчĕ йăрă
Ача чухне ял пĕвинче.
Тен, çавăнпах-ши ӳсрĕ йăрăс,
Хăва илемĕ пĕвĕнче.

Каçмашкăн каçрĕ-ха, ун-кунăн
Пăхать те — çук кунта никам.
Эппин, вăрманлăх хӳтлĕх панă
Пĕр ушкăн пограничника.

Каç пулчĕ те, каçарчĕ сулă
Ачаллă Юльăна кал-кал.

Настук питне сутатрĕ кулă:
«Пурах ман Мильăн ăраскал!»

Тек утăм та юласшăн марччĕ
Вĕсем çак пĕчĕк ушкăнран.
Пĕр офицерĕ ăнлантарчĕ:
— Эпир тин тухнă ункăран.

Канса илетпĕр те пĕр хушă
Кĕретпĕр çапăçма каллех.
Пымашкăн пирĕнпе хăрушă,
Сан каймалла часрах, халех.

Кунта аманасси те пулĕ,
Ача валли те канăç çук.
Суран çыхмашкăн юлтăр Юля,
Киле сан çитмелле, Настук.

Кайсассăн тĕлсĕррĕн — çĕтетĕн,
Пĕр юпаран теприн тĕлне
Утсассăн пурпĕрех çитетĕн
Пĕр-пĕр яла эс ир енне.

...Тăван пек уйрăлаççĕ ăшшăн
Хĕрарăмсем пĕр-пĕринчен.
Пĕрин çул выртĕ çулăм ăшшĕн,
Тепри те — пÿлĕх аллинче...

Настук ыраттарса пĕтерчĕ
Урисене, çапах утать.
Ун компасĕ — юпа ĕречĕ,
Ăçта-ши вăл илсе тухать?

— Тăр! Кам килет?! — хиствелĕ сасă
Сиктерчĕ Настьăна шартах.
Шкул ачисем-мĕн ҫывăрмасăр
Яла сыхлаҫҫĕ пушартан.

Пĕри килне леҫсе хăварчĕ
Уй урлă каҫнă Настьăна,
Ăна валли апат антарчĕ...
Ыр ҫынсăр мар тĕнче, чăнах.

...Вăраннă чух хĕвел ҫӳлтеччĕ —
Туймасăр ҫывăрнă вăрах.
Йăлт манăҫнă асапĕ-терчĕ,
Темрен те ыйхă тутлăрах.

Ытла та хăтлă пĕчĕк пӳлĕм,
Татах канасчĕ — вăхăт ҫук.
Иванков салине каҫ кӳлĕм
Ҫитсе те ёлкĕрчĕ Наҫтук.

Кунта военкомат ăҫта-ши?
Инҫе те мар-мĕн, тав Турра.
Унта Яккун пĕр-пĕр юлташĕ,
Тем каласассăн та, пурах.

Анчах кĕртмест салтак хуралҫă,
Те ҫапкаланчăк тет, чарать.
Хĕрарăмăн кĕпи хуралнă,
Пушмакĕ ҫăварне карать.

Фашист ҫăханĕсем тискеррĕн
Пĕр вĕҫĕм бомба тăкнă чух
Вăл сумкине таҫта ӳкернĕ,
Халь паспорт та, альбом та ҫук.

Киле çитеймĕн документсăр,
Саккунĕсем ытла кăра.
Темле чарсан та шикленмесĕр
Кĕрсе тăрать вăл алăкран.

Тӳрех пуçларĕç тĕпчемешкĕн:
— Тен, эс хăрушă диверсант?..
Фронт урлă ачапа килмешкĕн
Пĕччен епле вăй çитрĕ сан?

Çакна илтсен чун кӳтрĕ унăн,
Хуралчĕ куçĕ, пĕтрĕ вăй.
Юрать-ха ачине вăл хунă,
Тăнне çухатрĕ, ӳкрĕ хăй.

Çак вăхăтра ăна палларĕ
Тултан тин кĕнĕ офицер.
Пуçне шеллевлĕн пăркаларĕ:
— Епле хĕн курнă мĕскĕнскер.

Чăнах та чикĕрен вăл килнĕ,
Ун упăшкийĕ — офицер.
Чĕрех-ши вăл паян е вилнĕ,
Тӳрех хыпарсăр çĕтнĕскер?

— Вилмен!
Вилмешкĕн шутламасть те!
Туятăп эпĕ: вăл чĕрех. —
Куçне уçса сас пачĕ Настя. —
Тен, çапăçать пуль чиперех.

...Кам чикĕре — ун куçĕ витĕр,
Хăлхи те çивĕч, йăлт илтет.
«Итле, сăна — тăшман ан иртгĕр!» —
Çак йĕркене Настук пĕлет.

Мĕн тăхăннă тăшман салтакĕ,
Мĕнле плакат ун аллинче,
Мĕн чухлĕ çуран çарĕ, танкĕ —
Йăлтах сăнанă çул çинче.

Совет салтакĕсем нумай-и —
Аманнисем е вилнисем?
Тылра пурнакансем кам майлă,
Паян мĕн шухăшлă вĕсем?

Ыйтсан Настук пĕр такăнмасăр
Пĕлтерчĕ хăй мĕн курнине.
Хытарчĕç: «Пурăн кăлармасăр
Хăв асăнта мĕн пуррине.

Совет салтакĕ хĕç-пăшалсăр?
Куна çынна эс ан кала.
Паян çеç Совет Çарĕ халсăр,
Вăй илĕпĕр те — малалла!»

Тин Настя чунĕ канлĕх тупрĕ:
Пур справка унăн аллинче.
Ăна вăл куç шăрçи пек упрĕ,
Пĕтетĕн унсăр çул çинче.

Пĕчченшĕн вăрçă çулĕ йывăр,
Йышпа чухне фашист йĕрлет.

Пуç тăрринче çăхан пек йăвă
Ир-каçăн самолет кĕрлет.

Пĕр шиксĕр аялтан вĕçеççĕ
Тăшманăн самолечĕсем,
Чуна çӳçентерсе çиçеççĕ
Куç умĕнче çуначĕсем.

Тăкаççĕ бомбăсем пĕр вĕçĕм.
Чул мар вĕт çын, çапах тӳсет.
Пулать çак чăтăмăн та вĕçĕ —
Хаярлăх кунран-кун ӳсет.

Çапла вĕçсе килсен тăрукăн
Пĕррехинче тискер тăшман
Хăлхи хупланнă-мĕн Наçтукăн,
Çакна тӳрех вăл ăнланман.

Пăхать: пепки макрать пĕр сассăр,
Мĕскер-ши пулнă ачана?
Пуç ыратать кĕç çурăлассăн,
Апла ку тĕлĕк мар, чăнах.

Ăна тем пулăшу сĕнет-и —
Пĕр санитарка кускалать.
Наçтук илтмест хăй сассине те,
Тути çеç унăн хускалать.

Тăна кĕрсессĕн кĕлеткийĕ
Наçтукăн кайрĕ шăлтăрах.
Суран та çук — утмасть урийĕ,
Ку инкекрен тур çăлтăрах!

Мĕн-мĕн курман хĕрарăм пуçăн,
Тата мĕн курĕ — кам пĕлет?..

Пĕрре ир еннелле яр уççăн
Якку ун тĕлĕкне килет.

Сĕм вăрмантан тухать пек Яша,
Тăп чарăнать пек çур çулта.
Миша юпи çинче йăвашшăн
Мĕл-мĕл туса çунать çурта.

Хĕрарăм шанăçпа вăранчĕ,
Туять вăл: мăшăрĕ чĕрех.
Тинех ун чун-чĕри лăпланчĕ,
Утать ури те чиперех.

...Якку чĕрех, анчах амантрĕ
Фашист пули. Тăнран кайсан
Тăшман атти тапса вăратрĕ,
Ăсатрĕç лагере кайран.

Хаяр хуралçăран хăрушă
Ток янă йĕплĕ картаран
Тухса тарма тупаймăн хушă.
Тата... пĕччен епле таран?

Тискер тăшман çынна хĕрхенмĕ,
Чура тесе кăна пăхать.
Камра пур тавăру хĕлхемĕ —
Якку йăлт хăй тавра пухать.

Хăюллăн пăлхава çĕкленчĕ
Асаплă халăх кар тăрса,
Шел, ĕçĕ ăнăççăр вĕçленчĕ,
Сахалăш ĕлкĕрчĕ тарса.

Пĕрлех ҫӳрес пулсан аванччĕ —
Хыҫра хурал йытти вĕрет.
Пайланчĕҫ юриех, саланчĕҫ,
Пытанчĕҫ кам ăҫта пĕлет.

Парчев вăрманĕ ирĕк, аслă,
Кĕрсен вĕҫне тухма та ҫук.
Ҫурхи кунра янрать ҫĕр саслăн,
Шăпланнă халь, пĕр чун та ҫук.

Якку атти лачкам йĕпенчĕ.
Ҫире тип вырăн та юлман.
Тайкаланса пырса сĕвенчĕ,
Вăйна парсамччĕ, ват юман.

Ҫĕтсе ҫӳренĕ май тĕл пулчĕ
Якку Микола поляка.
Унпа юлташĕсем те пурччĕ,
Ал пачĕҫ пограничника.

Пĕр хутора ҫитсе пытанчĕҫ,
Тĕрек пурах ҫав ушкăнра.
Пĕрле отряд пухсан аванччĕ,
Мĕн усă уйрăм таркăнран?

Чуралăха ҫакланнă Польша
Тăрантарать тăшман ҫарне.
Поляк чунне илесшĕн пуль-ши,
Таптать ют атă ун ҫĕрне.

Жандарм хуҫа халь пур ҫĕрте те,
Ҫараттăрах — ан хирĕҫле.
Чĕнсессĕн лагерьте ҫĕретĕн,
Пуҫна чиксе ĕҫле, ĕҫле...



Чура пуласшăн мар яш-кĕрĕм.
Тарпа пуçтаранна тыр-пул
Каллех ют кĕлете-и кĕрĕ?
Ку мăшкăла тӳсес мĕн чул?

Пытарнă хĕç-пăшал та пур ун,
Ăна мĕн-ма тутăхтарас?
Тăрантăр пырĕ харам пырăн,
Ăна тăхлан тутантарас.

Çак пĕчĕк ушкăн каварланчĕ
Тумашкăн сăтăр тăшмана.
Кĕç склад та база кăварланчĕ,
Йăванчĕ поезд çырмана...

Уй куçлă тет, вăрман — хăлхаллă,
Хыпар вăл сарăлать хуллен.
Вĕсем çинчен пĕлет-мĕн халăх,
Мĕн кирлĕ — пулăшать куллен.

Ак тепĕр пĕчĕк ушкăн килчĕ,
Ертӳçисем — ик осетин.
Партизансен çемйи вăй илчĕ,
Ыран татах та ӳсĕ, тен.

«Вăрманĕнче те йывăç йăвă,
Те партизанĕ йышлăрах?
Сахал вăйпа çĕнмешкĕн йывăр», —
Тесе тăшман шутлатăрах.

Фронта ярас вăй-халĕ чактăр,
Çӳретĕр вăл чĕтре-чĕтре —

Партизансен тĕллевĕ çак-тăр,
Тĕл лектĕр пуля та йĕтре.

— Сан опыт пур, çулпа та аслă,
Пулсам эс командир, чăваш. —
Каларĕç çамрăксем пĕр саслăн, —
Тăшманшăн пулмăпăр йăваш.

Çут тĕнчере фашист ан юлтăр,
Ан суттăр юлташа юлташ.
Калать Якку:
— Апла тăк пултăр
Ман вăрттăн ятăм та Чăваш.

...Чăваш çынни сăпайлă, ырă,
Таçта та пур ун хурăнташ.
Ун чĕринче тупсассăн вырăн —
Тупатăн ĕмĕрлĕх юлташ.

Тарпа хул-çурăм касăлсан та
Хăй çăкăрне çиет чăваш.
Темле нушаллă пурăнсан та
Пуç касакан пулман чăваш.

Анчах ури çине пустармĕ
Хăйне хака хуран чăваш.
Вăл çич юта хуçа пултармĕ,
Юравлăн авăнмĕ вăш-ваш.

Чăваш тесен çуралнă ялĕ —
Чучукасси аса килет.
Çемйи ăçта-ши унăн халĕ?
Чĕрех-сывах-ши — кам пĕлет?..

Наçтук чĕрех. Килне çитесшĕн
Асапланать вăл çул çинче.
Ачи ун канăççăр, йĕресшĕн.
Утас çулсем вара инçе.

Йышпа Бровар вăрманĕ витĕр
Чакса кĕреççĕ Киева.
Наçтук шăпийĕ шелсĕр питĕ,
Нуша тем чул та тийĕ-ха.

Чугун çула тин çеç юсарĕç—
Каллех юрăхсăра тухать.
Тăшманăн вăйлă сывлăш çарĕ,
Пĕр вĕçĕм бомбăсем тăкать.

Вокзал патне пыма хăрушă,
Анчах çуран ăçта таран?
Наçтук асаплансан пĕр хушă
Çитейрĕ Харькова аран.

Кунта та тĕркĕшӳллĕ вăхăт.
Кам хыпăнтăр ют çын пирки?
Темле васкан пулсан та — пăхăн:
Эвакуацин пур йĕрки.

Васкавлăн вĕлт те вĕлт иртеççĕ
Фронта каян эшелонсем.
Тĕрĕслесе кăна кĕртеççĕ
Вакунсене çар çыннисем.

Кĕте-кĕте эрне те иртрĕ,
Çаплах ларса кайма май çук.

Тӗнче куҫать пуль Харьков витӗр,
Наҫтук валли ҫеҫ пуйӑс ҫук.

— Капла ларсассӑн эс пӗтетӗн, —
Шеллерӗ ватӑ санитар. —
Тур пулӑшсан киле ҫитетӗн
Ҫавра ҫулпа та ним те мар.

Аманнисем кунта. Тӑратпӑр
Рельса тӳрлетиччен кӑна.
Вара каллех ҫула тухатпӑр,
Лекмешкӗн тӑрӑш вакуна,

Ҫак пуйӑспа, тен, ларса пырӑн?..
— Ӑҫтан каять?
— Канаш урлах.
— Канаш?.. Вӑл пирӗн станци!
— Вырӑн
Апла пулсан тупатпӑрах.

— Пӗрре ларсассӑн аптӑрамӑп,
Чӑвашшӑн кил пекех Канаш.
Канашалла ҫитсен хӑрамӑп,
Унта ҫитсен пӗтмест чӑваш.

Кама — мӗнле, Канаш чӑвашшӑн
Тӗнче кӑвапипе пӗр тан.
Каяс-килес пулсан — тархасшӑн,
Ҫул уҫӑ ун Канаш пуртан.

...Фронта тӑк — пуйӑс ҫил пек кайӗ,
Тыла ҫӳрекенни мӑран.
Васкавлине ҫул панӑ майӑн
Разъездсенче тӑран, тӑран...

Настук чĕри çынсемшĕн усă:
Ăш хыпнă камăн — шыв парать.
Аманнисемшĕн вăл — çырусă,
Çырать те станцăра ярать.

Тахшин суранĕ питĕ йывăр,
Чĕнет хăй аташса: — Анне!
Лăпкать Настук: — Тăванăм, сывăр, —
Тарне шăлать салтакăнне.

Пĕрре, ачи анасласассăн,
Хайхи сăпка юрри пуçлать.
Çĕтет тӳрех ахлатнă сасă,
Вакун сасартăк шăп пулать.

Çыврать ача, ыйхи ун тарăн.
Ыйтаççĕ салтаксем: — Юрла.
Пит тăрăх вата санитарăн
Куççуль тумлать йăрла-йăрла.

Сăпка юрри янрать ачашшăн,
Салтак килне аса илет.
Юрри те сиплĕ-çке чăвашăн,
Чуна та сурана имлет.

Тинех асаплă çул вĕçленĕ,
Самантлăх пуйăс чарăнать.
Тухса юлаймасран шикленнĕн
Хĕрарăм вакунран анать.

Нумай та пуйăсĕ тăмарĕ,
Тапранчĕ, çулĕ ун инçе.

Çав самантрах ачаллă арăм
Лап ӳкрĕ чĕркуççи çине.

Çук, аманман Наçтук, сывах-ха,
Çаннипеле шăлать куçне.
Чун тĕпĕнчи тупа сăмахĕ
Хăех тухать чĕлхи çине:

— Çуралнă çĕр — тăван кĕтесĕм,
Санран ытла та аякка
Кайсан çеç, чăннипе илсессĕн,
Ăнлантăм эпĕ сан хакна.

Çула тухмастăп çакăн хыççăн.
Ан тив, ан пултăр ман тупра,
Ĕçлекене хăвармĕ выçă
Тарпа шăварăннă тăпра.

Ака туса ӳстерĕп тырă,
Хирте хăвармăп пĕр пучах.
Якку — салтак. Тылра ман вырăн,
Килте сӳнтермĕп эп вучах.

Нушаллă çын ыйтсассăн çăкăр —
Хам çимĕп те — тупатăпах.
Калас текен сăмахăм çакă,
Ак çĕр çыртса тупа тăвап.

...Вокзал тенин салхуллă шавĕ:
Пĕр вĕçĕмех вакун иртет.
Каякана мĕнле те çавă —
Ăсатакан çынна йĕртет.

Вăйпиттисем вăрçа каяççĕ,
Ватти-вĕтти юлать килте.

Суха тума кама яраççĕ,
Камсен турттармалла кĕлте?..

Сухал шăтман яшсем каяççĕ
(Ури çине ĕне пусман),
Хут купăс каласа ташлаççĕ:
Чăваш нихçан та пуç усман.

Качча тухас хĕрсем каяççĕ,
Пике юрлать... салтак юрри.
Йĕрес мартан вăйпа кулаççĕ
Хаваслăн курăнса юри.

Вĕсем çӳрес çулсем тумхахлă,
Вĕсем курас кунсем кăра.
Кашни салтакшăн пурнăç хаклă,
Çĕршыв тата та хаклăрах.

Наçтук ав таврăнать, тăраннă
Фашист тискерлĕхне курса.
Чĕри ун пĕрре мар тапраннă,
Куç вăйĕ пĕтнĕ макăрса.

Манас тесессĕн те манаймĕ
Çак вăрçă пушарне-кĕлне.
Тăхлан çусассăн та — ун айĕн
Васкарĕ вăл тăван килне.

Шупашкарта ун пур кĕтесĕ —
Пĕр пӳлĕм çеç — аван пĕрех.
Машина пуласса кĕтес-и —
Лавпа та çитрĕç чиперех.

Пурнас тесех вăл талпăнатчĕ —
Нушийĕ пынă юнашар.

Каллех ак вăрттăн такăнтарчĕ,
Кĕтмен çĕртен кăтартрĕ шар.

Вăт ăш çунтармăш! Кам шутланă?!
Хваттер иккен ют алăра.
Пĕлмесĕр мар чăваш калана:
Çук шаннă кайăк йăвара.

Тухса каймашкăн килĕшмерĕ
Унта вырнаçнă ют çемье.
Наçтук ним калама пĕлмерĕ,
Йĕрет: чĕри ытла çемçе.

Çук унăн пурăнма кĕтесĕ.
Инкекĕ çӳремест пĕччен:
Фронтран вăл килнине пĕлсессĕн
Чĕнсе тĕпчерĕç темĕнччен.

Шупашкара хыпар-мĕн çитнĕ —
Çынна сумран яран хыпар:
Наçтукăн упăшкийĕ çĕтнĕ.
Ăçта çухалнă? Паллă мар.

— Ху кăкăр ачипех ав çитнĕ,
Вилмен ик çулăм хушшинче.
Кала: ма пограничник çĕтнĕ?
Тен, çапăçать тăшман енче?

Наçтук мĕн калама пултарĕ?
— Çук, Яша Гитлер майлă мар!
Вăл тыткăнран та тухса тарĕ,
Ман мăшăрăм хăравçă мар!

— Совет салтакĕ парăнать-и?!
Пленри салтак — салтак та мар!

Вилет-и вăл е таврăнать-и —
Вăл ют, вăл — касăлнă тымар!

Тухман вĕт унăн вилнĕ ячĕ,
Апла çӳрет пуль-ха тарса.
Кала: мĕн тĕллевпе кам ячĕ
Сана фронт урлă каçарса?!

— Киле часрах çитме васкарăм,
Суймасăрах калап, чăнах.
Эп амăшĕ вĕт, эп — хĕрарăм,
Ӳстермелле ман ачана.

Çак çул чĕр тамăк пулчĕ маншăн,
Йĕмешкĕн те куççуль юлман,
Анчах та çĕр çăтман тăшманшăн
Эп тус та, тарçă та пулман.

— Тен, вăрттăн çыхăну та пур-тăр
Сан таркăн упăшкупала?..
— Вăл офицер...
— Хăть маршал пултăр!
Камран хыпар ярать? Кала!

Асту, суйсассăн япăх пулĕ:
Асаплăн, йытă пек вилен.
Сан пек çынсемшĕн шалккă пуля,
Е майкăч суйласа илен?..

Янрать чекист сăмах памасăр,
Наçтук итлет чĕнмесĕрех
Салтак пăтти çисе курмасăр
Пакунлă пулнă сĕмсĕре.

Аса илет те... ярӑм-ярӑм
Ӳкерчӗк курӑнать умра.
Пӗррехинче сисмен хӗрарӑм:
Эсэсовец тӑрать ҫумра.

Вӑл пӗчӗк Мильӑна куҫларӗ,
Кулать те илӗртет ӑна,
Туртса илсе выля пуҫларӗ,
Пӳске пек ывӑтать кӑна.

Ҫак тӗнчере пур япалан та
Пур хӑйӗн вӑхӑчӗ, йӗрки.
Ача куна ӑҫтан ӑнлантӑр?
Выляс йӑли ун — ӗмӗрхи.

Халь аркӑра вы ртмашкӑн вӑхӑт,
Тӗрек илсессӗн — утӗ-ха.
Ахӑлтатса кулать вӑл, пӑхӑр,
Сиксе хаваслӑн утьӑкка.

Ӑна халь ашшӗн вылятасчӗ
Арҫын телейӗпе тулса.
Эх, иккӗшне те ыталасчӗ
Наҫтукӑн хӗвел пек кулса.

Кулма-и?! Чӗрине хӗстернӗ
Капашсӑр шиклӗх: мӗн пулать?
Кушак хӑй йӑваран хӳтернӗ
Чӗкеҫ чӗппипеле вылять.

Пӑшал ҫӗкленӗ сивӗ чун та
Ҫут ҫӗрӗ тӑхӑннӑ алла.
Е пӗчӗк хӗр ӳсет-ши ун та —
Тивмерӗ, пачӗ каялла...

Çакна-им каласа паратăн?
Çăвар уçма та кирлĕ мар.
Кусем вĕт... пĕчĕк ачаран та
Тăваççĕ сутăнчăк ним мар.

Наçтук шăпи ытла та пилсĕр:
Епле васканăччĕ киле...
Халь акă тăрса юлчĕ килсĕр.
Пĕр çул кăна — Патреккеле.

Çакна Якку пĕлмесĕр юлтăр,
Шăпи ун хăйĕн те кăра.
Ютра ăçтан-ха çăмăл пултăр?
Вĕсен отрячĕ — ункăра.

Татса тухма хăюлăх кирлĕ,
Ăспа чеелĕх те кирлех.
Ларса шутларĕç те тем тĕрлĕ,
Май тупрĕç калаçса пĕрле.

Сĕмсĕрленет каратель явăл.
Вăл кĕчĕ шăтарса, анчах
Чăваш отрячĕ тунă «савăл»
Ăна кĕртет халь тип мунча.

Пĕр ушкăнĕ чакса кĕрет те,
Атакăна тухать тепри.
Тăшман арпашнă: мур пĕлет-и,
Хăш ушкăнĕ кунта тĕпри?

Карательсен малти отрячĕ
Халь хăй ик çулăм хушшинче.

Ав йышĕ те самай сайралчĕ,
Пĕлмеççĕ: хӳтлĕх хăш енче?

Чăваш отрячĕ «каснă алăк»,
Ура йĕрри те хăварман.
Тупаймăн шырасан та талăк,
Чаршав пек уншăн сĕм вăрман.

Çав кун карательсен отрячĕ
Турттарчĕ вăрмантан виле.
Кĕç ку хыпар та ураланчĕ,
Саланчĕ килĕрен киле.

Вăрман çынниййĕсем-мĕн йышлă,
Отрячĕсем те темиçе.
Чăваш эртелĕ алă çынлă,
Сыхлать, йĕрлет вăл нимĕçе.

Ӳссе пырать вĕсен хăвачĕ,
Пĕрлешрĕç пысăк ушкăнпа.
Ку — Федор Ковалев* отрячĕ,
Чăваш пĕр шухăшлă унпа.

Разведкăшăн явапла Яша,
Ун халь ятарлă взвод та пур.
Тăшман ăçта мĕскер тăвасшăн —
Пурне те илт, пурне те кур.

Чуралăха яма пуçтарнă
Яш-кĕрĕме пĕрре ирпе

* Ф.Н. Ковалев Адам Мицкевич ячĕллĕ отряда ертсе пынă. Унăн вăрттăн ячĕ — Теодор Альбрехт.

Чăваш маттурĕсем хăтарнă,
Вĕçтернĕ списокне кĕлпе.

Любартов, Люблин та Влодава,
Парчев енчи пур тăрăхра
Чăваш хисеплĕ те мухтавлă,
Чăн ячĕ çеç вăрттăнлăхра.

Çынсем пăшăлтатса калаççĕ:
«Чăваш тӳпкенĕ тăшмана».
Жандарм курман чухне каяççĕ
Леçмешкĕн çимĕç вăрмана.

Ытти çĕрте поляк чура та —
Вăрманĕнче хăех хуçа.
Кунта армак-чармак туратăн
Мĕлки те хăратать куçа.

Ялта çеç полицай хăюллă,
Вăрман тесен сехри хăпать.
Хуçа пулма тылра вăл юлнă,
Анчах кашни тĕмрен хăрать.

Пулсассăн сывă та вăй-халлă
Ахаль ларать-и партизан.
Шанать те пулăшать тĕк халăх —
Пур чи хăватлă парти сан.

Фронта хăват парса тăмашкăн
Чăрмантараççĕ Гитлера
Партизансем. Йĕрке тумашкăн
Хушу парать вăл Гиммлера.

Ăна вăл хĕç-пăшал та пачĕ,
Ăсатрĕ ултă пин салтак,

Ятарласа приказ кӑларчӗ:
«Тасатӑр вӑрмана йӑлтах».

Карательсем йыш пуҫтараҫҫӗ:
Фронта каяс салтаксене
Кунта ҫитсессӗн антараҫҫӗ,
Тытса чараҫҫӗ танксене.

Пӗр ушкӑн самолет та юлнӑ,
Куллен пуҫ тӑрринче кӗрлет.
Хӑравҫӑ та йышра хӑюллӑ,
Вӑрманалла шалах кӗрет.

Партизансем — сисчӳллӗ халӑх:
Куҫса ҫӳренӗ май шавах
Хыпарҫӑсем пуртан хӑлхаллӑ,
Хуралӗ сыхӑран сывах.

Йыш пысӑк чух, паллах, аванччӗ,
Анчах тарма май ҫук вӑр-вар.
Ик-виҫӗ ушкӑна пайланчӗҫ,
Кун пек куҫма та йывӑр мар.

Анчах асту, пырса ан тӑрӑн,
Тӑшман сыхлать чугун ҫула.
Ҫар хатӗрӗ куҫать ун тӑрӑх,
Каять йӑлтах тухӑҫалла.

Апла хӑвачӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн
Пӗтмен, пӗтес те ҫук Раҫҫей.
Кар тӑнӑ теҫҫӗ хӗрӗ-арӗ,
Юта хӗссе кӑлараҫҫех.

Ҫав ҫарӑн парӑнман салтакӗ —
Чӑваш партизанра ҫӳрет.

Çапла вăл пурнăç сакăлтакĕ —
Кама ăçта илсе кĕрет.

Ютра пулсан та хăрамасăр
Чăваш фашистсене тĕвет.
Ик çул пурнать хыпар памасăр —
Яма май çук, кĕтме тивет.

Паян явапла ĕç Яккушăн:
Вăл каç енне канаш пухать.
Часах ак вунă çынла ушкăн
Сĕм тĕттĕм вăрмантан тухать...

Малтан пĕр эшелон йăванчĕ
Çул айккине, унтан — тепри.
Çĕн техника арканчĕ, ванчĕ.
Çав кирлĕ! Вантăр, пĕттĕр-и!

Çакланчĕ нимĕç хĕç-пăшалĕ
Хайхи партизансен алне.
Кĕçех ак хăйсенех ăшалĕ
Туса вĕри тăхлан айне.

...Заданирен килетчĕ ушкăн,
Ăна Чăваш ертсе пырать.
Çĕр иртрĕ ăнăçуллă уншăн,
Каçчен кансассăн та юрать.

Пĕр шанчăклă «хваттер» те пурччĕ:
Русилы хутор патĕнчен
Микола Адамюкăн çурчĕ
Инçе те мар ларать пĕччен.

Чăваш кунта малтан та пулнă,
Кунта сипленнĕ суранран.
Вăрман çыннисемпе çурт тулнă
Паян та. Ĕçĕ мăй таран:

Кĕпи-йĕмне çуса саплаççĕ,
Тĕплеççĕ атă е пушмак.
Пӳртре те шăппăн сăмахлаççĕ,
Чăваш шăв-шав тума хушман.

Сахал-им килсĕр çыннăн терчĕ?
Татах та пурччĕ-ха ĕçсем,
Сасартăках хурал систерчĕ:
«Часрах пытанăр! Нимĕçсем!»

Хыçран иккен йĕрленĕ пӳтсĕр,
Çула хупларĕ пулемет.
Хуçа тăрса юлать пуль пӳртсĕр —
Тăшман кăларчĕ огнемет.

Çурта кĕç хыпса илчĕ çулăм.
Якку тытать гранатине:
— Вăрманалла чупсамччĕ, çăлăн, —
Тет кил хуçийĕн ачине.

Миколăн ик ачийĕ тарчĕ
Тавралăх тĕтĕмпе тулсан,
Вут-çулăмран тухма пултарчĕ
Тата пĕр-икĕ партизан.

Шалта Чăваш çеç юлнă чĕрĕ,
Сăнать хăй тĕтĕм витĕрех.
— Çывхарăр, — тет вăл, —
Польша çĕрĕн
Тăпри сире те виттĕрех.

Пеме пӑрахрӗ те шӑпланчӗ
Вут-ҫулӑм хыпнӑ йывӑҫ ҫурт.
Пӗр ушкӑн нимӗҫ хӑюланчӗ:
— Пӑхар, тен, чӗрӗ чун та ҫук?

Чӑнах та ӑссӑр халӑх мар-и:
Ҫунсан та ҫӑлӑнӑҫ ыйтса
Шалтан пӗр ҫын та вӗт тухмарӗ
Ик аллине ҫӳле йӑтса.

Пӳртре мӗн пулнине курасшӑн
Пырса капланнӑччӗ кӑна —
Граната алӑрах Чӑвашӑн,
Вӑл карт! ҫеҫ туртрӗ ункӑна...

Мӗскершӗн ӑш вӑркать Наҫтукӑн
Е инкеке сисет-и, тем?..
Шутла-шутла ӑсран та тухӑн,
Мӗн чухлӗ тӳсеет этем?

Чуна илеҫҫӗ пулӗ ёнтӗ
Якку пирки ыйта-ыйта.
Допрос тума паян та чӗннӗ,
Тӗпчерӗҫ ик сехет ытла.

Килне вӑл каҫ енне ҫеҫ ҫитрӗ,
Тӑртаннӑ куҫӗ хӗп-хӗрлех.
Йӗре-йӗре ыйхи те ҫӗтрӗ,
Кӑшт кӑтӑш пулчӗ-и ҫӗрле.

Теме пӗлтернӗ тӗлӗк курчӗ:
Пӗччен утать пек мӑн ҫулпа.
Хайхи миша юпи те пурччӗ,
Ҫунмастчӗ ун ҫинчи ҫурта.

Кăварланса тăрсан та ăшĕ,
Усалланман Наçтук чĕри.
Ял-йышпала пуплет вăл ăшшăн,
Хăйсем кирек-мĕн теччĕр-и.

Учителе вĕреннĕ Настя,
Вăл —
кирлĕ çын ялти шкулта.
Хирти ĕçрен те юлаймастăн:
Кашни этем шутра кунта.

Тулли пучах пуçне уссассăн
Наçтук шăллаттарать çурла.
Çава тытать кирлех пулсассăн —
Ĕç тăкăнса тăрать çулла.

Кĕр кунĕ те иртет канусăр:
Тăпачă йăт та —
йĕтеме.
Фронта валли ĕçлен пĕр пуссăр —
Мĕн вăй парать-ши этеме?

Нуски çыхать вăл хĕл ларсассăн
Е ик пӳрнеллĕ перчетке.
Салтак чирлемĕ шăнмасассăн
Окопĕнче, çĕр пӳртĕнче.

Ĕçрех иртет Наçтукăн кунĕ,
Вăл халăх тӳснине тӳсет.
Килте çеç çуталать ун чунĕ:
Пепки кунран-кунах ӳсет.

— Вĕçленнĕ вăрçă! Вăрçă пĕтнĕ!
Çапса аркатнă йĕксĕке! —
Хыпарлаканăн сас та çĕтнĕ,
Хăй малаллах тапса сикет.

Чуна кӳрсе телей те канăç
Саланчĕ çиçĕмле хыпар.
Йышпа татах ӳсет вăл савнăç —
Çак ырă кун килте ан лар.

Кĕрлет хаваслă юрă-ташă,
Настук пур татăлса йĕрет:
«Çухалнăскер, чĕрех-ши Яша,
Чĕрех пулсан ăçта çӳрет?

Ни уйăх витĕр курăнмаççĕ
Якку утса çӳрен уйсем,
Ни çăлтăр витĕр палăрмаççĕ
Якку калла килес çулсем».

Килмерĕ икĕ пиччĕш Настьăн.
Аманнăскер, Санькка тете,
Нумай пурăнасса шанмасть те —
Хуллен çӳрекелет килте.

Туять Настук: çаплах сыхлаççĕ,
Килте те ĕçĕнче ăна.
Ентешĕсем те сăмахлаççĕ
Унпа асăрханса кăна.

Хăвна валли инкек тупатăн —
Калаç-ха шанчăксăр çынпа,

Тӳрех хӑв шанчӑкран тухатӑн
Таса пулсассӑн та чунпа.

Сив сӑмаха та, сив куҫа та
Нимле те хӑнӑхма май ҫук.
Кам умӗнче чунна уҫатӑн —
Уя тухса йӗрет Наҫтук.

Лешсем хӑйсен ӗҫне пӗлеҫҫӗ:
Куллен чӗнеҫҫӗ допроса.
Пур пек вӑя, чуна илеҫҫӗ
Тем тӗрлӗ ыйтусем парса.

Ҫак инкекрен ҫӑлма пултарӗ
Пӗртен-пӗр Юля ҫеҫ ӑна.
Шыраттарсан, тен, сасӑ парӗ,
Хӑй чӗрӗ пултӑрччӗ кӑна.

Пӗрле мӗн чухлӗ тӳснӗ пулӗ,
Фронт урлӑ каҫнӑччӗ пӗрлех.
Тӗрӗссине пӗлтерӗ Юля,
Вӑл ун хутне кӗме кирлех.

— Чим, — тет Наҫтук, —
мӗскер тӑватӑп?
Ҫырмашкӑн ман тӑхтамалла:
Хама сыхлаҫҫӗ, ҫырӑва та
Уҫса тӗрӗслеҫҫех, паллах.

Медсестрана допрос тумашкӑн
Пӗр вӗҫӗм пуҫлӗҫ сӗтӗрме.
Ӑна та памӗ пурӑнмашкӑн
Ҫак тимӗр алӑксӑр тӗрме.

...Куçран пачах та вĕçертмесĕр
Ăна сыхларĕç вун пĕр çул!
Ниçтан та ыр хыпар илтмесĕр
Чĕри тĕпренчĕ-çке тем чул.

Шăп вун пĕр çул памарĕç канăç,
Йăпатрĕ хĕр ачи анчах.
Якку çухалчĕ, пурпĕр шанăç
Ун мăшăрĕн пĕтмен тăнчах.

Текех «тăшман» шырамĕ Сталин,
Халь ĕнтĕ Берия та çук.
Кун чухлĕ тӳснипе сахал-им?..
Тин сывлăш çавăрчĕ Настук.

Ача çуртне вырнаçрĕ Настя,
Пурнать вăл халĕ хулара.
Канмашкăн вăхăчĕ юлмасть те —
Çĕр ĕç ун икĕ алăра.

Ура сассинченех пĕлеççĕ,
Вăл алăка уççассăнах
Чупса пырса сырса илеççĕ,
Пĕри, тепри хушать сăмах.

Ку ачасем атте-аннесĕр,
Анчах та ăраскалсăр мар.
Нуша авсан та шеллемесĕр,
Пуçа усмашкăн кирлĕ мар.

— Ыр вăхăт сирĕншĕн те килĕ,
Шанас пулать малашлăха, —
Тет вĕсене Настук ăш пиллĕн.
Епле шеллемĕн тăлăха.

Вĕсемшĕнех вăл ăшшăн кулĕ
Куçран пăхса ачашшăнрах.
Анне, аппа та, тус та пулĕ
Кунти кашни ачашăнах.

Çул хыççăн çул иртет. Наçтукăн
Аманнă чĕрине сиплет.
Çĕрле ыйхи вĕçсен тăрукăн
Ирччен вăл шăплăха тимлет.

Ӳссе çитсе çын пулчĕ хĕрĕ.
Студентка. Лайăх вĕренет.
Диплом илсен ĕçе те кĕрĕ,
Кунтах килме ĕмĕтленет.

Ача чухне ыйтатчĕ вĕçĕм:
«Анне, атте хăçан килет?»
Вăл халь хăш-пĕр юмахăн вĕçĕ
Салхуллă пулнине пĕлет.

Шел, ашшĕн ăшшине туймарĕ
Чĕр тамăк витĕр тухнă чун,
Ачалăхра та ыр курмарĕ,
Телей умра пулинччĕ ун.

Контузи ахалех иртет-и —
Наçтук чирпе асап тӳсет.
Пулни-иртни аса килет те,
Тăнлавĕ хĕскĕч пек хĕсет.

Кĕтмен çĕртен хыпар саланчĕ:
Хаçат шырать пĕр паттăра.

Çакна илтсе Настук пăлханчĕ,
Килте пĕлмест лара-тăра.

Чăваш иккен çав сыннăн ячĕ
Çÿренĕ тет вăл Польшăра.
Хăюллă партизан отрячĕ
Ун пулнă тет çав çĕршывра.

Тăшманăн сехрине хăптарнă
Чăваш отрячĕ пĕрмаях,
Ун пурлăхне вăл вут хыптарнă,
Юта тĕп тунă самаях.

Çав паттăра хăш ял ÿстернĕ:
Уйкас, Янкас е Анаткас?
Хăш ял çăлкуçĕ шыв ĕçтернĕ:
Çĕнкас, Çăлкас е Çавалкас?

Мĕн чухлĕ салтака ăсатрĕ
Чугун çулпа Вăрмар, Вăрнар.
Мĕн чул пурнас çынна çухатрĕ
Йăмраллă Тарăнвар, Урнар.

Нумай маттур çынсем Хутарăн,
Пур сан та паттăрсем, Тукас.
Фашизмран пире хăтарнă
Чăваш ялне епле тупас?

Тен, эсĕ сăпкара сиктернĕ
Ача чухне ăна, Кавал?
Ÿссессĕн пысăк пул эс тенĕ.
Çынна хăват парать халал.

Ма шарламасть Ямаш, Мачамăш,
Мĕн-ма чĕнмест Чутай, Чураш?

Ăçта çав çыннăн ашшĕ-амăш,
Ăçта çуралнă-ши Чăваш?

Тен, санăн ывăлу, Юманлăх,
Ютпа кĕрешнĕ Польшăра?..
Историе кĕрсе юлмалăх
Ĕç тунă ывăлна шыра.

Чăваш кунтан-и, çук-и — пурпĕр
Хăть палăк ларт кашни ялта:
Çĕнтерĕве туптанă пурте,
Ăсатнă темĕн чул салтак.

Миçе чăваш хыпарсăр çĕтнĕ
Хăрушă вăрçă хирĕнче.
Пĕр шанăç юлмасан та кĕтнĕ
Ачи-пăчийĕ килĕнче.

«Чăваш ман мăшăрăм пулман-ши? —
Чунпа сисет Наçтук: — Çавах!
Вăл тавăрнă пепкишĕн, маншăн,
Кĕрешнĕ тăшманпа шавах».

Редакцие çыру вăл ячĕ,
Портрет та чикрĕ конверта
(Шăп вăрçă умĕн çаптарсаччĕ),
Хурав килинччĕ хăвăртрах.

«Ман мăшăр ку. Якку ун ячĕ.
Курсан асилĕç, тен, сăнран.
Чăваш пулма пултарнă ячĕ
Çӳренĕ чух партизанра.

Ун Николаев хушамачĕ.
Чучукасси çынни. Чăваш.

Ман мăшăр чикĕ хураллатчĕ,
Пулман вăл тăшманпа йăваш».

Çыравçăсем çухатнă канăç,
Партизансем, тĕпчевçĕсем...
Çук, ятсăр çухалмашкăн памĕç
Çав харсăр чăваша вĕсем.

Йĕрлевçĕсем шырав пуçланă,
Çырса партизансем патне
Вĕсем тупса пĕлме шутланă
Чăвашăн вилĕмсĕр ятне.

«Ăна пĕлекенсем сывах-и,
Пурне те шыраса тупас». —
Ку Федор Ковалев сăмахĕ,
Ахаль сăмах та мар — приказ.

Чăваш текен çынна палланă
Кашни яла та хутора
Партизансен элчи васканă,
Ширанă ятсăр паттăра.

Шупашкартан инçех те мар-мĕн
Пурнать Мазитов партизан.
Çук адрес. Ку та чăрмантармĕ —
Ыйтса ярсан тупать Хусан.

Хурав çырса ярать Хусанĕ:
«Сире, тен, кирлĕ Пĕкĕлме,
Унта пур Польша партизанĕ,
Вăл тивĕç Чăваша пĕлме».

Ăçта кăна çыру вĕçмерĕ:
Мускав, Варшава, Бухара...

Çак вăрăм шырава вĕçлерĕ
Хурав килни Шупашкара.

Чăваш вăл — Яков Николаев,
Тек пĕр иккĕленӳ те çук.
Вăл мар тесе никам калаймĕ,
Хирĕçлеме сăлтав та çук.

Пин хут танлаштарса тĕпченĕ
Историксем, партизансем.
Сăнне пăхсан Чăваш ку тенĕ
Нумай ялта пурнакансем.

«Çавах!» — ĕнентерет Влодава,
«Çавах!» — çирĕплетет Парчев.
Манман-мĕн Чăваша Варшава,
Манаймĕ халăхĕ пур чух.

Наçтук пăлханчĕ те хумханчĕ:
Чĕри иккен улталанман!
Пĕр савăнчĕ хăй, пĕр хурланчĕ:
Якку хыпарсăр çухалман.

Ун халĕ тепĕр хут каласчĕ:
«Ман мăшăр сутăнчăк пулман!»
Тĕнче илтмелĕх кăшкăрасчĕ —
Çăвар уçма та вăй юлман.

Сив чул пулса ăшра упраннă
Асаплă кӳренӳ хухать.
Вăл халь ейӳ пекех тапраннă,
Вĕри куççуль пулса юхать.

Эс мăшăрун чысне упрарăн,
Ӳстертĕн пепкӳне хăвах.
Вутчуль пек тӳсĕмлĕ хĕрарăм,
Тавах сана, Наçтук, тавах!

Çĕнтерӳре тӳпе пур сан та,
Чучукасси çынни, чăваш.
Мухтав сана, ăçта пулсан та
Чăваш ятне яман Чăваш.

*Июль. 2012*



# Киле килчĕ салтак вăрçăран

*Тӑван ҫӗршывӑн аслӑ вӑрҫинче*
*хыпарсӑр ҫухалнӑ*
*салтаксене тата вӗсене кӗтнӗ*
*ҫынсене халаллатӑп*

Илтсен кайса ӳкес пек каялла
Шалт тӗлӗнтерчӗ ҫак хыпар яла:
Салтак килет, кунта ҫуралнӑскер,
Хӑрушӑ вӑрҫӑра ҫухалнӑскер.

Вӑл сас паманччӗ утмӑл ҫичӗ ҫул,
Куҫҫуль юхтарнӑ мӑшӑрӗ мӗн чул.
Типмен минтерӗ ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе,
Вӑл кӗтнӗ салтака ӗмӗрӗпе.

Ачи-пӑчи «атте» тесе ӳсмен,
Атте ҫукран мӗн-мӗн кӑна тӳсмен.
Нуша ӑса вӗрентнӗ — ашшӗ мар,
Ӑш ҫил пуҫран лӑпканӑ — ашшӗ мар.

Выҫса асап курни — хӑямата.
«Пленра аҫу! Вӑл сутӑннӑ юта!» —
Тесе калатчӗҫ хӑшӗсем хӑртса,
Ҫӳрен вара чунри чулна йӑтса.

Телей тени хӗрарӑмшӑн ӑҫта?
Евтух хавхаланатчӗ шанӑҫпа:
«Килмен вӗт вилнӗ хучӗ, тав Турра,
Апла тӑк тивӗҫ, — тетчӗ, — таврӑнма.

Улталама пултараймасть чӗре,
Ак тӗлӗкре те куртӑм: чӗп-чӗрех.
Яр уҫҫӑн астӑвап ҫак саманта:
Аҫу утса пырать пек вӑрманта.

Калать пек: «Пыраймастăп-ха халех,
Тыттарчĕç пуртă аллăма каллех.
Туссем валли касатăп эп пура,
Пĕренисем тем вăрăмăш, шултра».

Анчах пура касни вăл аван мар,
Хăйне валли темен-ха – лăпланар.
Хыпарлайман, тен, йывăр аманса,
Килет пуль-ха... Килет ак çаврăнса».

Куç умĕнче Венькан пĕр сивĕ ир:
Вут хутнă амăшĕ, саплать тумтир.
Юрланă май: «Ăçта каян, чĕкеç?..»
Йĕрсех ярать: «Пуçа ăçта чикес?»

Вăраннăскер, ачи выртать шăпах,
Сас тухасран минтер çыртать шăлпа:
«Ӳсетпĕр ак, чăтсам кăштах, анне,
Ун чух пĕрле туртар çемье лавне».

Евтух кĕтсен те савнă çыннине
Салтак килсе уçмарĕ хапхине.
Кану мĕнне пĕлмерĕç аллисем,
Нуша курсах çын пулчĕç ачисем.

Ирттерчĕ ĕмĕрне хăраххăнах,
Текех ар ăшшине туймасăрах.
Евтух пек мăшăрсем пуртан кăна
Раççей салтакĕ çитнĕ Берлина.

...Калуга çĕрĕ. Барсуки сали.
Кунти масар пин-пин салтак валли.
Вăрманĕнчи кашни тĕм — вилтăпри,
Хаш! сывласа кашлать вăрман тăрри.

Металл шыран прибор хыпашласан
Салтак тупри сас панă: «Кăларсам!
Çĕршывшăн вилнĕ паттăр ятсăр мар,
Ак капсула, уçсамччĕ, вуласам».

Шыравçăсем пуçлаççĕ ĕçлеме.
Хуллен-хуллен сирсессĕн çереме
Тухать Иван, хыпарсăр çĕтнĕскер.
Шăпи ытла та пулнă-çке кĕске.

Атеистсем пурах-ши окопра,
Атакăна çĕкленекен полкра?
Мăйна çакман пулсассăн çут хĕрес
Кама шанса вут-çулăма кĕрес?

Иванăн та хĕресĕ çумĕнчех,
Çĕрмесĕр выртнă вăл халиччен ех.
Пур кашăкĕ. Укçи те çухалман,
Патронĕсем вара нумай юлман.

Пĕртен-пĕр çулĕ пулнă çак кăна:
Каймашкăн пултаран атакăна.
Ик пурнăç мар никамăн та, анчах —
Вилетĕн-и, юлатăн-и — ан чак!

Ăна пӳрмен çав вăрмантан тухма.
Шăтарнă кăкăрне вĕри тăхлан,
Пуç купташки саланнă çурмаран —
Юлмашкăн чĕрĕ майĕ те пулман.

Вăл тăшмана Мускав патне яман,
Вилсессĕн те пĕр утăм та чакман.
Çак вырăн ячĕ — Вилĕм уçланки,
Кунтах тăшманăн тулнă карланки.

Иван шăм-шаккине курупкăна
Хурса илсе çитерчĕç Йӳçпана
Шыравçăсем. Утпа çӳрет хыпар,
Пуçтарăнчĕ ял халăхĕ văр-вар.

...Вăрçа кайни шăп утмăл сакăр çул,
Иваншăн тин вĕçленчĕ вутлă çул.
Тин саваласçĕ ун валли хăма,
Тăваççĕ тупăк салтака хума.

Тавах Турра! Пĕр пĕчĕкçĕ хĕрес
Киле илсе çитерчĕ. Ма йĕрес?
Ĕнер çеç вилнĕн тăкăнать куççуль —
Çак утмăл çичĕ çул пулман та пуль.

Ӳт илнĕн туйăнатчĕç сурансем,
Лăпланнă пекчĕ тăваннă чунсем...
Ăçтан тухать-ши ырату? Ăçтан?
Иккен пачах та ним те манăçман.

Иван ак килчĕ. Икĕ шăллĕне
Кам тупаять ăçта пытарнине?
Пуç хунă хăш ялта е хулара?
Тăприсене пусман-ши хыт-хура?

Кӳрши ыйтать: «Ăçта-ши ман атте?»
Тепри калать: «Килмен ман асатте».
Тĕнче вăрçин инкекĕ те нуши
Пырса тивмен çемье кунта пур-ши?

Килсессĕн вилнĕ хучĕ вăрçăран
Алран паратчĕ почтальон аран.

Чуна çурса йĕретчĕç арăмсем,
Халран кайса ÿкетчĕç амăшсем.

Çын çухални тата хăрушăрах —
Тухатăн шанăçран çав хушăрах.
Тен, паттăрла вилсе салтак çĕтет?
Çемйин хисепĕ пурпĕрех пĕтет.

«Хыпарсăр çĕтнĕ манăн та атте,
Хĕрес çине çырса хуман ятне.
Те сывлăхĕшĕн çутмалла çурта,
Те канлĕхĕшĕн кĕлтăвас Турра?

Вилмен çынна чикместĕн шăтăка,
Кĕтеттĕмĕр куççуль тăка-тăка.
Иван тете, вăл çукчĕ-и санпа? —
Куçне шăлса ыйтать Раис аппа. —

Те сутăнчăк-ха сан аçу тесе
Вĕренÿрен те ячĕç хÿтерсе.
Фронтра атте хыпарсăр çухални
Яланлăхах çул хупрĕ ман валли».

Ун чух аттесĕр юлнă ачасем —
Паян шап-шурă çÿçлĕ ватăсем.
Кам сывă — пурте тупăк умĕнче,
Мĕнле вут тĕлкĕшет пуль чунĕнче.

Иртни аса килсен чун ĕсĕклет.
Вĕсем ĕçпе аманнă пĕчĕклех:
Хул-çурăма тарлатнă сухапуç,
Çава-çурла. Тÿлевĕ — «тавтапуç».

Пулсан та выçă, çĕтĕк, тупата,
Кашни тарса каясшăнччĕ фронта.

Герой пулас тесе-и? Тавăру
Тĕллевĕпе хĕмленнĕ çав ăру.

Чĕнмест Венькка. Мăн чăмакка пырта.
Çухалнă ашшĕ тупăкра выртать.
Асра ун сăнĕ — вăтăр иккĕри,
Хаваслăччĕ ун чух вăл çав тери.

Ӳстернĕ ĕç платникăн ал вăйне,
Йăтатчĕ харăс икĕ ывăлне.
Йăл-йăл çиçет асли — Вениамин,
Ахăлтатса кулатчĕ Валентин.

Сасартăк — вăрçă! Улттăри ача
Ăна-кăна ăнкараймасть пачах:
Мĕскер хурлантарать çак амăшне,
Мĕн-ма çухатнă ашшĕ канăçне?

Илтет: пуплеççĕ иккĕш ирпеле.
— Каяс пулать чăваш йăлипеле.
Хулпуççирен уртсассăн ал шăлли
Килме çул хывăнать сана валли.

— Апла пулсан кайса ыйтас лаша,
Тăван-хурăнташпа сывпуллашас.
Колхоз вити пулакан мар пушах,
Унта эпир те панă виç лаша.

Анчах çав кун ял тăрăх çӳреме
Ăна пĕр лашине те кӳлтермен.
Хурланнăччĕ... Тĕнче ыр çынсăр мар,
Кӳрши килсе тăратрĕ янавар.

Пĕрремĕш ал шăлли çакать Евтух.
— Йăли çапла: эс, мăшăрăм, ан тух.

Венькка пырасшăн ав, хампа илем,
Урапапа ярăнтарса килем.

Ик-виç арçын ыталанса тăрса
Салтак юрри те ячĕç ак тăсса.
Юрри — хăйсем каяс çулсем çинчен,
Вут-çулăмпа çунан уйсем çинчен.

Çӳрерĕ килĕрен салтак ачи,
Пĕр ĕмĕр асăнмалăх катаччи
Ярăнтарса хăварчĕ Веньккана.
Асра юлни те халĕ çав кăна.

...Алпах йĕтса çитерчĕç тупăка
Масар çине. Антарчĕç шăтăка.
Кашни пăрахрĕ ывăçĕ тăпри:
Ыйхи салтакăн канлĕ пултăр-и.

Валькка килмерĕ пытарма. Хавшак.
Тек çамрăк мар, йывăрланать шăм-шак.
Инçе çула тухса кайма килтен
Пĕччен вăй-халĕ çитеймен-и, тен.

Часах ӳссе те ларчĕ тĕмеске.
Тин килнĕ çын яланлăх кайрĕ-çке.
Чечексемпе хупларĕç тăпрана,
Пăшал персе чыс турĕç Ивана.

Тинех хĕрес ларать тăпра çинче,
Пур ят та, хушамат та ун çинче.
Сава турпасĕ — сарăм вырăнне.
Мансам, Иван, Калуга вăрманне.

Унта нумай-ха ёҫ йӗрлевҫӗсен:
Пуҫ хунӑ ик отряд йӗлтӗрҫӗсен,
Тӑват дивизи пӗтнӗ. Асӑнар,
Вӗсемшӑн те паян ҫурта ҫутар.

Текех сан каяс ҫук атакӑна,
Ял-хулара халь ёҫлӗ шав кӑна.
Тӗп тунӑ тӑшмана хӑй йӑвинче.
Канлех эс ҫывӑр ял масарӗнче.

Чечек лартса хӑварчӗ мӑнуку,
Шыв сапрӗ куркапа мӑн мӑнуку.
Пӗтмест йӑху, пӗтмешкӗн ҫуралман,
Пурнать сан ыр яту та — ҫухалман.

...Ҫӗнтерӗве туптанӑ ӑруран
Паян нумайӑш — тарӑн ыйхӑра.
Житомирта выртаҫҫӗ, Ригӑра,
Брестра, Варшавӑра та Прагӑра,

Мускав, Орел, Смоленск ҫӑвисенче,
Мӗн чул вӗсем Мамай тӳпемӗнче...
Пӗр Латвире ҫеҫ виҫ ҫӗр ал масар,
Мӗльюн салтакӑн ячӗ паллӑ мар.

Вӗсемшӗн вӑрҫӑ халӗ те пӗтмен,
Вӗсемшӗн канӑҫ халӗ те ҫитмен.
Шырав ытла та кайрӗ вӑрӑма,
Хӑҫан парса татар-ши парӑма?

*Июнь. 2009*

## АВТОРТАН

Халĕ тин, нумай-нумай çул иртнĕ хыççăн, çав хăрушă вăрçă çинчен çырма кирлĕ мар: çырас тенине тахçанах çырнă, калас тенине йăлтах каланă текенсем пуррине пĕлетĕп. Эпĕ вăрçă хыççăн çуралнă çын, унăн нуши-асапне тӳсмен. Çапах та çывăх маншăн çак тема. Атте фронтовикчĕ, сывлăхĕ хавшанăскер патшалăхран нимĕнле çăмăллăх та курмарĕ, йышлă ачи-пăчине ура çине тăратаймасăрах çĕре кĕчĕ. Вăл чĕрĕ чухне унран пĕтĕмпех ыйтса пĕлме ăс çитерейменшĕн ĕмĕр тăршшĕпех ӳкĕнетĕп. Ытла та çамрăкла юлнă çав аттерен.

Чĕрĕк ĕмĕр ытла журналистикăра ĕçлесе вăрçă ветеранĕсемпе, тылра кунне-çĕрне пăхмасăр пилĕк авнă çынсемпе, тăшман тыткăнĕнче е нимĕçсем патĕнче тарçăра пулса курнисемпе, вилĕм лагерĕсенчен çăлăнса тухнисемпе пĕрре мар тĕл пулса калаçнă. Историн чĕрĕ свидетелĕсем каласа пани ман чуна пăлхантарнă та, хумхантарнă та. Вĕсем çулсерен сахалланса пыраççĕ. Тĕнчери лару-тăру улшăнса пынă май историе урăхлатса çыракансем нумайланма пуçларĕç. Эпир историе сахал пĕлнипе усă курасшăн.

Пирĕн хыççăн килнĕ, килекен ăрусем чунсăр çынсем-им вара? Нивушлĕ вĕсемшĕн пурпĕрех фашизма епле çĕнтерни? Çук, апла мар. Паянхи йĕрлевçĕсем нумай-нумай çул каялла хыпарсăр çухалнă çынсене шыраса тупаççĕ, вĕсен ырă ячĕсене вилĕмсĕрлĕх кӳреççĕ. Чыс та мухтав çавăн пек яш-кĕрĕме.

Вĕсем шыраса тупнă паттăрсене, Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче сас-хурасăр çĕтнĕскерсене, Чăваш Республикине те пĕрре мар илсе килчĕç, ял масарĕсенче чысласа пытарчĕç. Вĕсенчен пĕрне, Етĕрне районĕнчи Йӳçпанри Иван Федотова Калуга вăрманĕнче тупса илсе килсен çуралчĕ те «Киле килчĕ салтак вăрçăран» поэма. Хыпарсăр çухалнисен спискĕ паян та çав тери вăрăм.

Легендăна кĕрсе юлнă Чăваш арăмĕпе мана Елчĕк районĕнчи пĕр колхоз председателĕ (питĕ шел, унăн хушаматне астумастăп) паллаштарнăччĕ. Анастасия Константиновна Николаева каласа пани ĕмĕрлĕх асăма кĕрсе юлчĕ. Кинора курнине мар, кĕнекере вуласа пĕлнине мар, хăй мĕн тӳссе ирттернине каласа пачĕ вăл мана. Çав кунсене аса илесси хăйĕншĕн çав тери йывăр пулин те.

1995 çулхи майăн 4-мĕшĕнче «Хыпар» хаçатра «Бомба ман çинех ӳкессĕн туйăнатчĕ» ятлă пысăк очерк пичетлесе кăлартăм. Пурпĕрех ку кăна çителĕксĕррине туйса тăраттăм. Хаçатри очерка литература жанрне куçарма ĕмĕтленсе пурăнтăм.

Çав ĕмĕт тинех пурнăçланчĕ. «Чăваш» поэма ачасемпе çамрăксем валли çырнă произведенисен конкурсĕнче çĕнтерсе кĕнеке хальлĕн тухать, вулакан патне çитет. Унăн тĕп геройĕсем — Наçтукпа Якку. Вĕсен сăнарĕсене Яков Николаевичпа Анастасия Константиновна Николаевсен пурнăçĕнчи тата хаяр вăрçă вăхăтĕнчи событисем урлă кăтартса панă. Апла пулин те ку ĕç документлă хайлав мар, художествăлла произведени. Наçтукăн тертлĕ те асаплă çулне, шăпине сăнлама унпа хăйĕнпе курса калаçни пулăшрĕ пулсан, Яков Николаевич çинчен çырма уйрăмах йывăр килчĕ. А.Ф. Пономаревпа М.И. Иванов журналистсене тав сăмахĕ каласа хăварасшăн.

Чăвашăн вăрçă вăхăтĕнчи паттăрлăхĕ çинчен вĕсем çырнă «Человек из легенды» документлă кĕнекене вуласа пĕлтĕм. Поэмăра шухăшласа кăларнă суя паттăрлăх ан пултăр терĕм.

Яков Николаевич Николаев Шупашкар уесĕнчи Чучукасси ялĕнче (халĕ ку ял çук ĕнтĕ, ун вырăнĕнче Çĕнĕ Шупашкар хули) 1911 çулта çуралнă. Вăрçăччен Белоруссире пограничниксен заставин начальникĕ пулнă. Нимĕç фашисчĕсем сĕмсĕррĕн тапăнса кĕнĕ самантранах вăл кĕрешĕве çĕкленнĕ. Темле хăюллăн çапăçсан та тăшман çарне тытса чарма май килмен, Хĕрлĕ Çарăн чакса кайма тивнĕ. Темиçе уйăхран Яков Николаевич аманса тыткăна лекнĕ, ăна Польша территорийĕнчи лагере ăсатнă. Хăюллă пограничник хăйпе пĕр шухăшлă çынсене пухса нимĕçсен лагерĕнчен тарма пултарнă, Парчев вăрманĕнче партизансен отрядне йĕркеленĕ. Партизансем те, вырăнти халăх та ăна Чăваш ятпа кăна пĕлнĕ. Каярахпа унăн отрячĕ Адам Мицкевич ячĕллĕ отряд йышне кĕнĕ. Чăваш 1943 çулта паттăрла вилĕмпе вилнĕ. Фашистсен сехрине хăпартнă хăюллă çын Яков Николаевич Николаев чăваш пулнине вăл вилнĕренпе 20 çул ытла иртсен тупса палăртнă, 1966 çулта ăна (вилнĕ хыççăн) Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Мăшăрĕ, Анастасия Константиновна, вăрçă пуçлансан кăкăр ачипе, тăвата уйăхри Эмилия хĕрĕпе, киле килме тухать. Тем тĕрлĕ асап тӳссе, фронт линийĕ урлă каçса 1941 çулхи октябрьте кăна Шупашкара çитет. Харьковран Канаша вăл тавар поезчĕпе килет. Поэмăри Наçтука эпĕ юриех санитари поезчĕпе илсе килтĕм, аманнă салтаксемшĕн çыру çыртартăм, пепки валли сăпка юрри юрлаттартăм, чăваш юррин асамлă вăйĕ çапла майпа курăнтăр

терӗм. Кунта суя ҫук: чӑваш хуйхӑра юрласа ӑшне пусарнӑ, савӑнӑҫра юрӑпах чунне уҫнӑ. Ытти пӗтӗмпех — тӗлӗкӗсем таранах — хӑй каласа панинчен. Хаяр вӑрҫӑ пынӑ чух пурнӑҫ чечекӗсене — ачасене ҫӑлса хӑварни паттӑрлӑх мар-и вара? Пепкисене ҫавӑтнӑ, йӑтнӑ пин-пин хӗрарӑм хӳтӗ ҫӗрелле васканӑ. Сӑмах май каласан, ҫак кӗнекене илемлетнӗ художникӑн И. Калентьеван асламӑшӗ те ҫуралас ачине упраса хӑварас тесе Белоруссирен пирӗн республикӑна ҫитнӗ.

Медсестра чӑн пурнӑҫра та Юля ятлах пулнӑ. Ҫул ҫинче мӗн ҫинчен калаҫнӑ-ши вӗсем Наҫтукпа иккӗшӗ? Пӗлместӗп, тавҫӑрса илме кӑна пултаратӑп. Паллах, вӑрҫӑчченхи мирлӗ те лӑпкӑ пурнӑҫа аса илнӗ. Тӑван ене васкакан Наҫтук кӗске кану саманчӗсенче ҫулри юлташне Чӑваш ҫӗршывӗ ҫинчен каласа панах ӗнтӗ. Житомирта ача ҫуртӗнче ӗҫлекен хӗрарӑмпа ҫывӑхрах паллашнӑ чух та Настя чӑваш халӑхӗн культурипе йӑли-йӗркине аса илсе ассӑн сывлать. Ҫав самантра ҫӗкленсе, хӑпартланса калаҫни ӗненмелле мар, суя курӑннӑ пулӗччӗ, ҫавӑнпа диалогсем кӗске, тунсӑхлӑ.

Канаша ҫитсен Анастасия Константиновна тупа тунӑ. Ҫак саманта ҫырма уйрӑмах йывӑр пулчӗ. Тупара пӗр сӑмах та ытлашши пулмалла мар, ҫав хушӑрах Наҫтук тӳснӗ асап, вӑл чӑваш ҫӗрне мӗн тери юратни, хӑй хӗрарӑм тата амӑшӗн тивӗҫӗсене мӗнре курни палӑрса тӑмалла. Анастасия Константиновна хӑй каланине кӑшт улӑштарма тытӑнатӑп та — тупана суялӑх кӗнине сисме пуҫлатӑп. Вара мӗн ҫырнине хуратса тӑкатӑп. Наҫтук мӗн курнине-тӳснине, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи вокзала чӗррӗн куҫ умне кӑларса тӑратсан ҫеҫ тупӑнчӗҫ кирлӗ сӑмахсем.

Тăван хулана, киле çитнĕ хĕрарăма тата пысăкрах тĕрĕслев кĕтнĕ: упăшки хыпарсăр çухалнăран тата фронт урлă кăкăр ачипе ăнăçлă каçса килнĕрен ăна хăрушсăрлăх органĕсенче ĕçлекенсем сыхлама, допроссемпе хăшкăлтарма пуçлаççĕ. Вун пĕр çул канăç памаççĕ, Сталин вилнĕ хыççăн çеç унран хăпаççĕ. Вăрçăн малтанхи кунĕсенче, уйăхĕсенче хăй курнă нумай-нумай самантсем пирки калама хăраса пурăннă вăл. Юраман та пулĕ. 1995 çулта манпа ним пытармасăр калаçрĕ. «Вăрçă пуçланнă куна аса илсенех куç умне патрон ыйтса кăшкăракан пограничниксем тухса тăраççĕ», — терĕ. Упăшки хыпарсăр çухални, çакăншăн НКВД хăйне сыхлани ун чунне чул пек пусса тăнă. «Мăшăрăм партизан отрядĕнче çапăçса пуçне хунине тупса палăртнă хыççăн та манран никам та каçару ыйтмарĕ. Хăрушсăрлăх органĕсенче ĕçлекенсенчен хăшĕ те пулин каçару ыйтнă пулсан мана пурăнма çăмăлрах пулатчĕ», — тенĕччĕ мана Анастасия Константиновна. Çапла каласа хăйĕн чун ыратăвне мана парса хăварчĕ. Çакă та хистерĕ «Чăваш» поэмăна çырма.

*Литературно-художественное издание*

Для детей среднего и старшего
школьного возраста

**Матвеева (Антонова) Галина Алексеевна**

# ЧĂВАШ

# ЧУВАШ

Поэмы

*На чувашском языке*

Редактор *В.Н. Алексеев*
Художник *И.Е. Калентьева*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Н.П. Печникова*
Компьютерная верстка *Э.В. Кирилловой*

12+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 27.05.13. Формат $84 \times 108^{1}/_{32}$. Бумага офсетная.
Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 4,2.
Тираж 1000 экз. Заказ № К-11025. Изд. № 37.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Мининформполитики Чувашии,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ГУП Чувашской Республики «ИПК «Чувашия»
Мининформполитики Чувашии,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

65. e

# Чăваш

Матвеева (Антонова) Галина Алексеевна 1957 çулта Вăрнар районĕнчи Асăмçырми ялĕнче çуралнă. Вăтам шкул хыççăн Урал университетĕнчи журналистика факультетĕнчен вĕренсе тухнă, «Хыпар», «Хресчен сасси», «Советская Чувашия» хаçатсенче ĕçленĕ. Сăвви-калавĕсем республикăра тухса тăракан хаçат-журналта, коллективлă сборниксенче пичетленнĕ. Вăл — «Хамăркка» кĕнеке авторĕ, тĕрлĕ çыравçăсен кĕнекисене чăвашла куçарнă. Çав шутра Л. Кадкинăн «Детство на гору спешит. Çунатлă çунашка» (икĕ чĕлхепе пичетленнĕ), Д. Суслинăн «Юрăпи», «Димка ашшĕне шырать», «Хăрушă вăрттăнлăх», Ж. Яновскаян «Карап ăсти» кĕнекисем, ытти авторсен произведенийĕсем.

Чăваш
кĕнеке
издательстви